Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮЛЬ 12 ЫТЛАРИКУН 159 (4972) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Чăваш АССР Верховный Совечĕн пĕрремĕш сессине пухасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Чăваш АССР Конституцин 36-мĕш статьи тăрăх çапла йышăнать:

Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республикăн Верховный Совечĕн пĕрремĕш сессине 1938 çулти июлĕн 26-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ Т. ВАСИЛЬЕВ.

Шупашкар хули.
1938 çул, июлĕн 10-мĕш.

Строительствона ĕç вăйĕ çителĕклĕ парар

Кăçал пирĕн Чăваш республикĕнче тумали строительство ĕçĕсен планĕ нихçанхинчен те пысăк. Промышленность строительствине пĕлтĕрхинчен виçĕ хут нумайрах—хĕрĕх пĕр мĕлйун тенкĕ ытла хывмала. Вăл шутран вăтăр мĕлйун тенке йахăн çĕнĕ заводсем тунă çĕре кайать. Культурă тата коммуналлă строительство йенĕпе те пысăк ĕçсем пурнăçа кĕртмеле: çĕнĕ шкулсем, больницасем, пурăнмали çуртсем нумай тумала.

Çак пысăк плана вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртессине татса паракан тĕп условисенчен пĕри вăл—ĕç вăйĕ, кадрсем. Анчах ĕç вăйĕ пухас тĕлĕшпе строительство организацисем йапăх ĕçлеççĕ. Районсенчи партипе совет организацисем те вăл ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Çавна пула строительство ĕçĕ кайа йулса пырать.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чугунçул строительствине ăнаçлăн илсе пыма кирлĕ материалсем (цемент, известь, рельсăсем) тата механизмсем те çителĕклĕ. Анчах ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулман пирки вăл механизмсемпе, материалсемпе туллин усă курма пултараймастпăр. Хывнă лини çине хăйăр турттарма уйăрнă поездсем тулли вăйпа ĕçлеймеççĕ. Пĕтĕмпе 160 пин кубла метр хăйăр турттарас вырăнне пайана 15 пин кубла метр çеç турттарнă. Шпал клеткисем хывнă çырмасене тăпра турттарасси йерипен пыни поездсем çÿретессине чарса тăрать. Çапла пулнипе чугунçула август уйăх тĕлне хута йарасси пурнăçа кĕмесĕр йулчĕ. Строительствора кашни кун 3000 çын ĕçлемеле тумасан чугунçула Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ палăртнă срокра—октябрь уйăхĕ тĕлне хута йарасси те хăрушлăх умĕнчех йулать.

Апла пулин те чугунçул строительствин управлени руководителĕсем ĕç вăйĕ хăй тĕллĕн пухăнасси çине шанса тăраççĕ пулас. Ĕç вăйĕ пухма йанă уполномоченнăйсем вырăнсăр çÿресе укçа-тенкĕ расходлаççĕ, кăçал ĕç вăйĕ пухас ĕçе тума уйăрнă 45 пин тенкĕ вырăнне 55 пин тенкĕ пĕтернĕ те ĕнтĕ, халĕ урăх тухса çÿремели те çук. Чугунçул строительстви начальникĕ Вавилкин йулташ строительствора çакăн пек йеркесĕрлĕхсем пулни çине килĕшÿлĕн пăхать пулас.

Чăвашстройтрест руководителĕсем ĕç вăйĕ пухас тĕлĕшпе нумай çулсем хушши калаçаççĕ. Калаçнине пурнăçа кĕртсе пынă пулсан, ĕç вăйĕ тахçанах çителĕклĕ пулмала. Вĕсен сăмахĕсем ĕçпе çыхăнмаççĕ. Советсен çуртне тунă çĕрте 300 çын вырăнне 100 çын çеç ĕçлĕççĕ. Ытти строительствосенче те ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Строительсем хăйсем çавнашкал хăрушлăхсем умĕнче тăнине курсах ĕçе лайăхлатас йенĕпе нимĕн те тумаççĕ. Колхозсемпе тата единоличниксемпе договорсем тăвассине йĕркелемен. Стройкăсене ĕçлеме килекенсем валли лайăх пурнăç условисем тăвассишĕн тăрăшмаççĕ. Çакăн хыççăн вара Стройтрест руководителĕсем строительствора ĕç вăйĕ çитменнине татах районсемпе колхозсем çине йăвантарма шутлаççĕ-ши?

Шупашкарти çĕнĕ пысăк заводсене тунă çĕрте те пайанхи куна ĕç вăйĕ çитмест, çавăнпа та кунта строительствона аплăн сарса пыма май çук.

Çĕрпÿ, Трак тата Куславкка районĕсенчи гидроэлектростанцисен строительствисенче ĕç чарăнса ларасси умĕнче тăрать. Вĕсем кăçалхи плана 28 процент çеç тултарнă. Районри партипе совет организацисем строительство ĕçĕсем çавнашкал начар пынине пĕлеççĕ пулин те çителĕклĕ пулăшу памаççĕ.

Стройкăсене ĕç вăйĕ организацилес тĕлĕшпе районри организацисем те кирлĕ пек ĕçлеççĕ теме çук. Хăшпĕр районсенче стройкăсене ĕç вăйĕ организацилес йенĕпе куллен çине тăрса ĕçлес вырăнне, вăл ĕçе пурнăçа кĕртме чăрмантарса пыраççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра чугунçул строительствине ĕçлеме кайакан колхозниксене выговор панă. Çĕрпÿ райĕçтăвком председателĕ Антонов йулташ „чугунçул ĕçĕ пире йĕрĕнтерче“ тесе калаçать. Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвком председателĕ Жирнов йулташ хăй стройкăра мĕçе çын ĕçленине те пĕлмест. Кунашкал фактсем ытти районсенче те пур. Районсенчи партипе совет организацисем ĕç вăйĕ пухма начар пулăшни стройкăсене пысăк чăрмав кÿрет.

Строительство ĕçне пурнăçа кĕртсе пыма кирлĕ таран ĕç вăйĕ тата кадрсем хатĕрлеме пирĕн республикре пур условисем те çителĕклĕ. Стройкăсем пушхирсенче мар, йалсем çывăхĕнче пулаççĕ. Чи паларахxи тата вăл пирĕн чăваш ĕççынниcем стройкăсенче пысăк активлăхпа ĕçленинче. Ĕççыннисем çĕнĕ стройкăсене тулли кăмăлпа тата пысăк хаваслăхпа ĕçлеме пыраççĕ. Стройкăсенче стахановла ĕçлекен колхозниксем те сахал мар. Чугунçул строительствине Тутаркас районĕнчен пынă Семен Тарасов йулташ хăйĕн бригадине йалан стахановла ĕçлет. Шупашкарта Советсен çуртне тунă çĕрте ĕçлекен каменщик Горбунов нормăна 140 процент тултарса пырать.

Стройкăсенче ĕçлеме рабочисем пухасси колхозсемпе тата единоличниксемпе договорсем тунипех пулмасть. Çĕнĕ стройкăсене ĕç вăйĕ çителĕклĕ памала тума республикри партипе совет организацисен колхозниксемпе единоличниксем хушшинче массăлă агитаци ĕçне анлăн сармала.

Строительство организацийĕсен çакна астумала. Колхозниксем халĕ пуйан та культурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсем строительствона пырсан та лайăх условисенче пурăнасшăн. Вĕсене лайăх условисем туса памалах. Пурăнмали çуртсем, столовăйсем, хаçат-журналсем, кĕнекесем тата вăхăта культурăлă ирттерме мĕн кирлисене пурне те туса памала. Суту илÿ организацисен çĕнĕ стройкăри рабочисем валли çителĕклĕ таран кирлĕ таварсем илсе пырас пулать. Çĕрпÿ, Шăхасан, Ишлей тата Трак райсоюзĕсен чугунçул строительствинчи рабочисене валли тавар тăратассине лайăхлатмăла. Ку ĕçе туса пыма вĕсене Чăвашсоюзăн куллен пулăшмала.

Строительствора пулнă халăх тăшманĕсем строительство ĕçне пур майсемпе те чăрмантарса пынă. Вĕсем пуриччен ытларах строительство организацисемпе колхозсем хушшинчи килĕшÿле çыхăнăва пăсма тăрăшнă. Халăх тăшманĕсене çапса аркатнă. Халĕ ĕнтĕ строительство организацисен колхозсемпе çыхăну тытассине вăйлатса ĕç вăйĕ çителĕклĕ пухмала тăвассишĕн тăрăшса ĕçлени кирлĕ. Районри партипе совет организацисен, колхоз правленисен, йалсоветсен çĕнĕ стройкăсене халех çителĕклĕ ĕç вăйĕ парассишĕн тăрăшмала, ку вăл вĕсен ответлă та чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

Çĕнĕ стройкăсене валли çак кунсенчех кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ памала—çакăнтан килет строительство ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пырасси.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Государствон Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Заемĕн 100 тенкĕлĕх облигацин образецĕ.

В. Олейников репродукцийĕ (Союзфото).

Заема ăнăçлăн сарасси—массăлă ăнлантару ĕçĕнчен килет

УЛАТĂР (телефон тăрăх). Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановленине радио тăрăх илтсенех, епĕр халăха çĕнĕ заем çинчен ăнлантарма тытăнтăмăр. Заема хăвартрах вырнаçтарас май районри организацисем массăлă ăнлантару ĕçне малтанхи кунсенчех тимлĕн тытăнчĕç. Заем çырăнтарас ĕçре йалсенче пулăшма ПСК(б)П Улатăр райкомĕ районри активран çынсем уйăрса йачĕ. Кунсăр пуçне йалсоветсемпе колхозсенче заем уполномоченнăйĕсем 75 çын, финанс активĕ 140 çын ĕçе каррăн тытăнчĕç.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховный Совет суйлавĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ агитаторсем, вулавçăсем, беседчиксем заем çырăнтарас ĕçе активлăн хутшăнчĕç.

Заем уполномоченнăйĕсем татах та тепĕр хут ĕççыннисене Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социализм пысăк çĕнтерÿсем, пысăк çитĕнÿсем туни çинчен каласа пачĕç. Агитаторсем, вулавçăсем, беседчиксем заем пирĕн пурнăçа аванлатас, çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçре мĕнле вырăн йышăнни, заемран ĕççыннисем çулсеренех пысăк тупăш илни çинчен, республикри районри примерсене илсе ăнлантарчĕç.

Епĕр малтанах пур çынсене те Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заем инструкципе паллаштартăмăр. Вырăнсенче заем çинчен агитацилемели материал çителĕклĕ пулчĕ.

Иртнĕ çулта районра ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели заема пурĕ 1.044 000 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал июлĕн 10-мĕшне Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заема районĕпе 1.716.000 тенкĕлĕх çырăннă. Ку шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 1.407 пин тенкелĕх колхозниксем хушшинче 309 пин тенкĕлĕх çырăннă.

Районри колхозсенчен чи малтан Ямпосадри „Прогресс“ колхоз колхозникĕсем çĕнĕ заема çырăнчĕç. Ку колхозра 1937 çулта Оборонă заемне 9 пин тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заема 14.635 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Колхозниксенчен чылайĕшĕ 100—200-шер тенкĕлĕх заем илме çырăннă. Колхозниксем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăннине кура йалсоветри единоличниксем те 50—75-шер тенкĕлĕх заем çырăнчĕç. Йалсовечĕпе единоличниксем хушшинче 1.375 тенкĕлĕх заем çырăннă. Халĕ Ямпосадри колхозниксемпе единоличниксем чылайĕшĕ çĕнĕ заемшăн укçа тÿлеме пуçларĕç.

Улатăр хулинче çĕнĕ заемшăн укçа пухас ĕç хĕрÿлĕн пырать. Заем укçи пухас ĕçре йал та хуларан йулмасть. Июлĕн 10-мĕшне колхозниксем хушшинче çĕнĕ заемшăн 1500 тенкĕ ытларах укçа пухнă.

Халĕ епĕр заем çырăнса çитереймен вырăнсенче заем çинчен ăнлантарса парас ĕçе вăйлататпăр, заема пысăк хастарлăхпа çырăннă пекех заем укçине вăхăтра пухас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр.

Райфинпай пуçлăхĕ—Разумовский

2.270 тенкĕлĕх çырăнчĕç

ВĂРНАР. Булатăйри Молотов йачĕпе тăракан колхозра бригадăсенче тата хĕрарăмсен пухăвĕсенче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заемĕ çинчен ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăнах колхозра 2.270 тенкĕлĕх заем çырăнчĕç.

Т. Трофимов.

ПСК(б)П Мускав Область Комитечĕн пленумĕ

Июлĕн 7—9-мĕшĕнче ПСК(б)П Мускав Область Комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум икĕ ыйту сÿтсе йавнă:

1. Тырпула пухса кĕртессипе йалхуçалăх продуктисем хатĕрлесси çинчен;

2. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Колхозниксене колхозсенчен кăларма чарасси çинчен“, „Колхозсенче тупăша тĕрĕс мар валеçни çинчен“, „Единоличниксен хуçалăхĕсем тĕлĕшпе налогсем ытти обязательствăйсем хурасси çинчен“ 1938 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕсене Истринский, Михневский тата Зарайский районĕсенче пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен.

Тырпула пухса кĕртессипе йалхуçалăх продуктисем хатĕрлес ыйту тăрăх пленум Мускав облаçĕн ĕçтăвакан комитет председателĕн Хохлов йулташпа Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕн Васильев йулташăн доклачĕсене итленĕ.

Кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйту тăрăх пленум ПСК(б)П Зарайский райком секретарĕн—Судейкин йулташăн, ПСК(б)П Истринский райком секретарĕн—Скибинский йулташăн, ПСК(б)П Михневский райком секретарĕн—Коковкин йулташăн доклачĕсене итленĕ.

Доклацсем тăрăх хĕрÿлĕн тухса калаçнă.

Пленум хупăнас умĕн ПСК(б)П Мускав облаçĕпе Мускав хула Комитечĕн секретарĕ А. И. Угаров йулташ сăмах тухса каланă.

Çав итлесе сÿтсе йавнă доклацсем тăрăх пленум решенисем йышăннă.

(ТАСС).

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕ

Июлĕн 10-мĕшĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ, лару председателĕ—В. М. Молотов йулташ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев йулташăн доклачĕ тăрăх ССР Союзĕн тата союзлă республикăсен, çавăн пекех тата влаçăн вырăнти органĕсен бюджет функцийĕсемпе прависене уйăрса палартас ыйтăва пăхса тухнă.

ССР Союзĕн тата союзлă республикăсен бюджет прависем çинчен калакан халăхи вăхăтра вăйра тăракан закона 1927 çулта кăларнă, вырăнти финанссем çинчен калакан Положенине—1926 çулта кăларнă.

Унтанпа çĕршыв экономикинче калама çук пысăк утăмсем пулчĕç—социализм çĕнтерчĕ. Çапла пулни ĕнтĕ государство бюджечĕн структурине те тĕпренех улăштарчĕ. ССР Союзĕн бюджечĕ (вырăнти бюджетсене кĕртсе шутласан) 1937 çулта, 1927—28 çулти бюджетпа танаштарсан, 14 хута йахăн ÿснĕ.

1927 çулхи бюджет саккунĕ тата вырăнти финанссем çинчен 1926 çулта кăларнă Положени кивелнĕ, вĕсем пурнăçа тата ССР Союзĕн çĕнĕ Конституцине хирĕçле пыракансем пулса йулчĕç.

Государство бюджечĕн доход çăлкуçĕсем вырăнĕнче: концессисенчен тухакан доходсем, государство органĕсем акционерлă обществосене хутшăннинче пулакан доходсем шутланса тăнă. Вырăнсенчи бюджетсен тĕп вырăнта тăракан доход çăлкуçĕсен шутĕнче уйрăм çынсен предприятийĕсенчен промысла налогĕсем илесси шутланса тăнă. Кусем халĕ ĕнтĕ пурнăçра çук.

1927 çулта кăларнă бюджет законĕ тăрăх республикăсенчи бюджетсен расход статьисем хушшинче ĕççĕрлĕхпе кĕрешмели ĕçсене тумашкăн укçа-тенкĕ уйăрса хурассине кăтартса хăварнă пулнă. Çав вăхăтрах пирĕн çĕршывра ĕççĕр йулнисем пачах та çук.

Кивĕ закон тăрăх вырăнсенчи налогсене республикăра закон кăларса палăртса хума та пултарнă. Çав вăхăтрах, ССР Союзĕн Çĕнĕ Конституцийĕ тăрăх союзри, республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсене тунă çĕре кайакан налогсемпе доходсене çирĕплетесси—ССР Союзĕ туса тăмали ĕç пулса тăрать. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Союзĕн Пĕрлĕхлĕ бюджетĕнче пĕтĕм бюджет (детализацин уйрăм степенĕсемпе) палăрса тăмала тума кирлĕ тесе, унта союз бюджечĕн пайне те, союзлă тата автономлă республикăсен бюджечĕсем тата вырăнти бюджетсем те кĕмеле тесе йышăннă. Çакна кура ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Финанс Халăх Комиссариатне пĕрлĕхлĕ Положени—ССР Союзĕн, республикăсен, çавăн пекех тата влаçăн вырăнти органĕсен бюджет прависене кăтартса паракан Положени туса пама хушнă.

Ку закона туса хатĕрлеме тата ăна пăхса тухма ССРС Верховный Советне тăратма ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Комисси тунă. Вăл Комиссире союзлă тата автономлă республикăсен, вырăнти Советсен представителĕсем пулаççĕ, Комисси председателĕ — В. М. Молотов йулташ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче „Тĕштырă культурисен вăрлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен“ йышăннă постановлени пурнăçа мĕнле кĕрсе пыни çинчен РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Бенедиктов йулташăн тата ССРС Совхозсен Халăх Комиссарĕн Юркин йулташăн доклачĕсене итленĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановлени вăрлăх ĕçĕнче лайăх йĕркелĕх тусa хурас тĕлĕшпе тумали ĕçсен пысăк программине палăртса хунă. Вăл постановлени тăрăх ĕçлесе, колхозсемпе совхозсем сортлă вăрлăхсемпе ытларах акас ĕçре чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. ССР Союзĕнчи тĕштыра акса тăвас тĕлĕшпе тĕп вырăнта тăракан хĕрĕх область цифрисем кăтартнă тăрăх, колхозсем 1937 çулта кĕрхи тĕштырă культурисем 74 процент сортлă вăрлăхсемпе акса хăварнă, 1938 çулта çурхи тĕштырă культурисен 71 процентне сортлă вăрлăхсемпе акнă. Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсенче 1938 çулта пухса илмели пĕтĕм тĕштырă культурисен 76,1 процентне сортлă вăрлăхсемпе акса хăварнă, сортлă вăрлăхпа акни 1937 çулта 37,5 процент çеç пулнă.

Государствон вăрлăх сорчĕсене сăнаса пăхмали участкисене çĕнĕрен 1.055 участкă тунă; государствон селекцилĕ станцисене 63 организациленĕ, районсенчи вăрлăх акса тăвакан 1.632 хуçалăх организациленĕ тата колхозсемпе совхозсенче вăрлăх участкисем уйăрса хунă.

Анчах та, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çÿлте асăннă постановленинче кăтартса панă пысăк ĕçсенчен чылайĕшне пурнăça кĕртмен. Хăшпĕр областьсенче суйласа илнĕ районри вăрлăх акса тăвакан хуçалăхсем вăрлăх акса тăвас ĕç ыйтнисене пурнăça кĕртме пултараймаççĕ. Нумай колхозсенче вăрлăх участокĕсене йачĕшĕн çеç уйăрса хунă тата кирлĕ вăхăтра уйăрса хуман, çакна пула ĕнтĕ вăл участоксем халиччен те колхозсене сортлă вăрлăх парса тăракан тĕп çăлкуçĕ пулса тăраймаççĕ. Государствон селекцилĕ станцисенчен чылайĕшне тĕрĕс организацилемен. Правительство селекцилĕ станцăсене тата селекционерсене тĕштырă культурисен сорчĕсене лайăхлатнăшăн, çĕнĕ лайăх сортсем туса каларнăшăн государство премийĕ парасси çинчен кăтартса панине те ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пурнăça кĕртмен.

Тĕштырă культурин сорчĕсене государство йенчен сăнаса пăхас ĕç умне тĕштырă культурисен чи лайăх сорчĕсене—çĕршыври тырпул тухăçне малашне татах хапартма май паракан сортсене суйласа илсе вĕсене хуçалăха кĕртес задача лартнă, анчах ăна халь те кирлĕ пек йĕркелесе йаман.

Ку çитменлĕхсем ĕнтĕ ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, ССРС Совхозсен Халăх Комиссариачĕ тата вырăнсенчи çĕрĕç органĕсем начар ĕçленĕрен пулнă, вĕсем тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумали ĕçсене кирлĕ пек йĕртсе пырассине организацилемен, ĕçĕн çак пит пысăк та паха участкисенче ĕçлеме ĕçе пĕлекен тата лайăх тĕрĕслене çынсем кирлĕ чухлĕ тупса парассине халиччен те пурнăça кĕртмен.

Çак ыйтăва ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче сÿтсе йавнă вăхăтра ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче „Тĕштырă культурисен вăрлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен“ йышăннă постановленине пĕтĕмĕшпех те туллин пурнăça кĕртес тĕлĕшпе чылай сĕнÿсем палăртса хунă.

Унтан Халăх Комиссарĕсен Совечĕ электростроительство планне пурнăça кĕртес ĕç мĕнле пыни çинчен Йавăр промышленность Халăх Комиссарĕн заместителĕн Первухин йулташăн докладне итленĕ.

ССРС Халăх Комиссариачĕн Совечĕ электростроительство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тумали чылай ĕçсем палăртса хунă.

(ТАСС).

Совет летчицисем çитĕнĕвĕсене пĕтĕм союзри рекордсем туса çирĕплетнĕ

ССР Союзĕн Косарев йачĕпе тăракан Тĕп аэроклубĕн авиацие спорт комисси президиумĕн черетлĕ ларăвĕнче çарти виçĕ летчицăн—П. Осипенкон, В. Ломакон, М. Расковăн вичта анса ларасăр вĕçнин материалĕсене пăхса тухнă.

Спорт комиссарĕсем тăратнă материалсем тăрăх, çакна палăртнă: Осипенко, Ломако тата Раскова йулташсем июлĕн 2 мĕшĕнче „МП-1“ гидросамолетпа Севастополь—Архангельск (Холмовский кÿлли) маршрутпа вичта анса ларасăр 2.371 километр та 990 метр вĕçнĕ.

ССР Союзĕн Косарев йачĕпе тăракан Тĕп аэроклубĕн авиацие спорт комисси президиумĕ çар летчицисен çитĕнĕвĕсене хĕрарăмсен тÿррĕн тата тÿрĕн мар вĕççе тунă пĕтĕм союзри рекордсем тесе çирĕплетнĕ.

Совет летчицисен рекордлă вĕçевĕн материалĕсене йурие те хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери рекордчĕсем туса çирĕплетме Пĕтĕм Тенчери Авиаци Федерацийĕн (ФАИ) Президиумне йăрăççĕ. (ТАСС).

Тырпулсене кĕске срокра, тăкаксăр пухса кĕртме мĕн кирли колхозсен пурте пур
Колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе большевикла организацилени кирлĕ

Çитменлĕхсем палăрмасăр йулчĕç

Июлĕн 5-мĕшĕнче Кÿкеçре Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен тата йалсовет председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çакăн пек ыйтусем пулчĕç: 1) Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси, 2) Çĕнĕ заема сарасси, 3) Çул-йĕр строительстви.

Пĕррремĕш ыйтупа райĕçтăвком председателĕ тырпулсене пухса кĕртесси çинчен ССРСоюзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленийе вуласа пачĕ те, ун хыççăн çĕрĕç пай пуçлăхĕпе МТС директорĕ содоклад пекки турĕç. Çавăн хыççăн вара ку ыйту пĕтрĕ те.

Пире, колхоз председателĕсене, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленесси çинчен тăракан ыйтăва çавăн пек çиелтен кăна пăхса тухни пĕртте кăмăла каймарĕ. Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре районра çитменлĕхсем пит нумай. Епĕр хамăр йенчен çав çитменлĕхсене кăтартса парасшăнччĕ. Анчах май пулмарĕ.

Мĕнле çитменлĕхсем пур-ха? Çитменлĕхсем, паллах, чылай колхозсенче пур. Анчах çитменлĕхсем колхозсенчен çеç мар, районри организацисенчен те килеççĕ. Епĕр çавсем çинчен каласшăнччĕ те.

Акă, çĕрĕç пайне илсен, колхозсене вăл çителĕклĕ йертсе пымасть, кирлĕ кăтартусене вăхăтра памасть. Кооперацийе илсен, вăл та тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕçре чылай чăрмавсем тăвать. Çавасемпе лапаткасене вăхăтра кÿрсе килсе памасть. Столовăйсем тата яслисем валъъи продуктăсене те çителĕклĕ кÿрсе килмест.

Çавăн пекех районри сывлăх пайĕ те начар ĕçлет. Яслисенче ачасене йепле пăхса усрамали çинчен нимĕнле кăтартусем те памасть. Тата тепĕр организаци вăл—çыхăну пайĕ. Районри çыхăну кантурĕ хаçатсене вăхăтра тăратаймасть, уйра ĕçленĕ çĕре илсе пырса парасси çинчен шутламасть те.

Çапла вара, канашлăва васкавлăн ирттернĕ пирки, çитменлĕхсем пытанса йулчĕç. Канашлу хăйĕн задачине пурнăçа кĕртеймесĕр иртрĕ.

Колхоз председателĕ.

Машиноведсен курсĕ

ТĂВАЙ. Июлĕн 2-мĕшĕнче райçĕрĕç пайĕ çумĕнче машиноведсен курсĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Курсра пĕтĕмпе 27 çын. Вĕсем косилкăсемпе, жнейкăсемпе, молотилкăсемпе тата йалхуçалăхĕнчи ытти машинăсемпе ĕçлеме вĕреневеççĕ. Курсра лекцисене МТС агрономĕсем вулаççĕ.

А. Пикишкин.

Ăмăрту договорне тĕрĕслеççĕ

Тăрмăшри Ленин йачĕпе тăракан колхозпа Нăрвашри „Красная Чувашия" колхоз (Тăвай р.) вăйлă тырпулшăн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Çав ăмăртура малти вырăна тухассишĕн вĕсем хытă кĕрешеççĕ, тырпулсене пухса кĕртме вăйлăн хатĕрленеççĕ. Вĕсем халь социализмла ăмăрту договорне мĕнле пурнăça кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслÿре икĕ колхозра та çитĕнÿсем пулин те, çитменлĕхсене те палăртса хăварчĕç.

„Красная Чувашия" колхоз вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве анлăн сарса йанă. Уйа тислĕк кăларас плана колхоз йăлтах пурнăçланă, агроплансене вăхăтра, тĕрĕс пурнăçласа пынă.

Халь колхоз 479 гектар çинчи тырпула çумкурăкĕсенчен тасатнă хыççăн, тырпулсене чи кĕске срокра, пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртме хĕрсех хатĕрленет. Колхозра 14 бригадă, вĕсенчен 43 звено тунă. Кашни бригадăрах политвулавçăсем уйăрса çирĕплетнĕ.

Колхозăн 2 жнейкă—вĕсем пурте йусавлă. Жнейкăпа ĕçленĕ чух тăкăннă тырра пухса пыракан йешчĕксем туса майлаштарса лартнă.

789 мих тата шăналăксем хатĕрленĕ, çурласем çителĕклĕ. Мĕн пурĕ 77 амбар, вĕсен тăррисене лайăх витсе хунă. Йалхуçалăх машинисемпе ĕçлеме йатарласа курсран 13 çын вĕрентсе кăларнă.

Уй ĕçĕ вăхăтĕнче 635 çынна валъъи пĕрлешÿлĕ столовăй пулать. Столовăй валъъи продуктăсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Июлĕн 10-мĕшĕнчен 450 ача валъъи ясли ĕçлет.

Çавнашкалах ку колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те аван. 1938 çулхи январĕн 1-мĕшне сысна ферминче 225 çурă пулнă, вĕсен йышĕ кулленех ÿсет. Ĕне ферми те нумай ÿснĕ, государствона сĕт-çу памали плана тахçанах тултарнă.

Анчах çитменлĕхсем те пур-ха. 3-мĕш бригадă тулăна, 4-мĕш бригадă тулăпа сĕлĕне тата 7-мĕш бригадă çĕрулмине çумкурăкĕсенчен тасатман.

Тăрмăшри Ленин йачĕпе тăракан колхозра договор çинче кăтартнă пунктсене пурне те пурнăça кĕртсе пымаççĕ. Кăçал ку колхозăн планпа 24 пин лав тислĕк хатĕрлесе уйа кăлармала пулнă пулсан, мĕн пурĕ те 5673 лав кăна хатĕрленĕ.

Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси те кирлĕ пек пулса пымасть. Колхозăн 4 жнейкă, пĕри те йусавлă мар. 788 çурларан пайанхи куна çĕр çурла кăна шăллатарнă. Колхозăн 41 амбар, вĕсен тăррисене пĕринне те витмен, çăмăр кайать. Тата амбарсене пĕрне те дезинфекцилемен. Çавăн пекех çумкурăксемпе кĕрешесси те çителĕксĕр. Витнĕ итемсем иккĕ, вĕсем иккĕшĕ те иртнĕ çултах ишĕлсе аннă, йусама тытăнман-ха.

Тĕрĕслÿ тăрăх йулашкинчен çакна каламала. Ку колхоз район центрĕнчен инçех мар. Ун çинчен çĕрĕç пайĕ те пит лайăх пĕлет. Çавах та, çĕрĕç пай пуçлăхĕ Козлов йултăш Ленин йачĕпе тăракан колхоз пур йеппе те районра малта пырать, тесе пур канашлусенче те хыттăнах калать.

Çавнашкалах çак кунсенче çĕнĕ Ишпуçĕнчи Чапаев йачĕпе тăракан, Чÿтейри „Хурçă" колхозсем ăмăрту договорне тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслÿре ку колхозсенче иккĕшĕнче те лайăх ĕçлени палăрчĕ. „Хурçă" колхозра 207 гектар çинчи çуртрисене икĕ хут çумкурăкĕсенчен тасатнă. Тырпулсене пухса кĕртмели йалхуçалăх машинисене—3 лобогрейкă, 2 косилкă, 4 молотилкă, 4 сортировкă, 4 веялкă, 1 триер йусаса хатĕрленĕ.

Колхозăн 125 урапа, вĕсем пурте йусавлă, лаша таврашĕсем çителĕклĕ. Итемсене тасатса пĕтернĕ, витнĕ итем виççĕ, иккĕшне йусанă.

Тырпулсене хума 24 амбар пур, вĕсене халĕ дезинфекци тăваççĕ. Кашни бригадăрах 30—40-шер мих тата шăналăксем хатĕрленĕ.

Кăçал ку колхозра комбайнпа 150 гектар вырмала. Комбайнпа вырмали участкăсене уйăрса хунă Комбайн валъъи мих тата шăналăксем хатĕрлесе хунă Халĕ комбайна кÿрсе килсе ăна лайăх вырăна лартнă.

Уйхир ĕçĕ вăхăтĕнче ясли уçма çурт уйăрса хунă. Продуктăсене те çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Колхоз утă çулма июлĕн 6-мĕшĕнче тухрĕ, унта халĕ хĕрсех социализмла ăмăрту пырать.

Ал. Пикишкин.
Вл. Борисов.

Силос хывас плана тултарнă

МАРТЫНКАССИНЧИ (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозри бригадăсем йышлă выльăх-чĕрлĕхсем валъъи ытларах апат хатĕрлесси-шĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Силос—выльăхсемшĕн сĕткенлĕ апат пулса тăрать. Çавна астуса бригадăсем силос чылай хывса хăварассишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Райçĕрĕç пайĕ парă план тăрăх колхозăн кăçал 120 тоннă силос хывса хăвармала. Колхозри кашни бригадă 35 шер тоннă, пурĕ 140 тоннă силос хывса хăварнă. Çавăн чухлĕ курăка вăрмантан пухнă тата рĕлтренсемпе те нумай усă курнă.

И. Сергеев.

Клещсем çинчен маннă

Канаш. Шаккăлти „Искра" тата Йумансарти „Хĕрлĕ Октябрь" колхозсенче кăçалхи вăйлă тырпула пухса кĕме лайăх хатĕрленеççĕ. Ку колхозсенче йалхуçалăх машинисене йусаса çитернĕ, витнĕ итемсене тасатнă, лаша кÿлмели таврашсене çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Çав вăхăтрах чылай колхозсенче тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕç йапăх пырать. Ватапуçĕнчи „Идея Ленина", Караклари „Броневик" тата Анаткас-Уçырмари „Производитель" колхозсенче ку вăхăта çитиччченех жнейкăсемпе утă çулмали машинăсене йусаса çитермен. Ку колхозсенче витнĕ итемсене те тасатман.

Иртнĕ çулсенче Канаш районĕнче чылай çĕрте клещсем пулнă. Вĕсем кăçал та пулма пултараççĕ. Вĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе амбарсене, машинăсене тата ĕçхатĕрсене пурне те дезинфекцилеме кирлĕ. Анчах Канаш районĕнче çав ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Ку тарана çитсе нихăш колхозра та амбарсене дезинфекцилемен. Çĕрĕç пайĕ те колхозсене çак ĕçе туса ирттерме кирлине кăтартса паман.

Ку çеç те мар. Канашри Çĕрĕç пайĕ районра миçе жнейкă пурри тата миçе жнейкă йусани çинчен те тĕплĕн пĕлмест.

Хĕрÿлĕ ĕç вăхăчĕ—тыррă вырас вăхăт çывхарса çитрĕ. Çĕрĕç пайĕн колхозсене йертсе пырас ĕçре татăклă улшăну тумала.

Арк. Кириллов.

Икĕ колхоз—иккĕшĕ те хатĕр мар

ИШЛЕЙ. Кĕрхи тырăсем пулса çитеççĕ. Ăнса пулакан тырпула пĕр тăкаксăр тата вăхăтра пуçтарса кĕме хатĕрленмеле. Анчах колхозсенче тырпула уйхиртен пухса кĕме хатĕрленесси çаплах вăраххăн пырать-ха.

Мăнал йалсоветне кĕрекен „Тимĕрçырми" колхоз тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе чылай агротехникăлă ĕçсем тунă. Вăрлăх участкисене уйăрнă, вĕсене çумкурăксенчен тасатнă.

Анчах лайăх пулнă тырпула пухса кĕме колхоз начар хатĕрленет. Колхознисем хушшинче ПСК(б)П Обкомĕн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Уйхиртен тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленесси" çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йавнă хыççăн чылай ĕçсем тума палăртнă. Çапах та тума палăртнă ĕçсенчен чылайĕшне пурнăça кĕртмен.

Колхозра 3 бригадă, бригадăсем пĕр-перинпе социализмла ăмăртса ĕçлеме договорсем тунă. Анчах ăмăрту договорĕ мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслемеççĕ. Пĕр бригадăра та витнĕ итемсем çук. Витнĕ итем мар, ÿплесене те йусамаççĕ. Икĕ молотилкăран пĕрин те привочĕ çук. Жнейкăсен чылай пайĕсем çитмеççĕ. Уйхир ĕçĕнче ĕçлеме план туман, ача ясли, пĕрлешÿлĕ апатланма столовăй тăвассине аса та илмеççĕ.

Ишлей-Покровск йалсоветне кĕрекен „Социализм" колхоз та тырпулсене пухса кĕме пачах хатĕрленмен.

Çавăн пекех „Социализм" колхоз çумкурăксемпе те кĕрешмест. Çуртрисене çумкурăксем пусса илнĕ пулин те, пĕр гектар та çумламан. Бригадирсем Н. Мускаринов, И. Меркуров колхозниксене ĕçе организацилесе йертсе пырас вырăнне, ĕçсе çÿреççĕ. Колхозниксен ĕçлес хаваслăхĕ пысăк, вĕсене ĕçре йертсе пыни кирлĕ.

Гер. Щербаков.

1938 çулти виççĕмĕш кварталта Камышинри (Сталинград облаçĕ) кĕленче заводне ĕçе йараççĕ. Заводăн пĕрремĕш черетне ĕçе йарсан çулталăка 50 мĕлйун штук кĕленче банкă туса кăларакан пулать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Заводăн пĕр корпусĕ. Генератор кожухне вырна лартма хатĕрлеççĕ.

(„Пресклише"—Союзфото).

Кашни колхозник хăйĕн ĕçне пĕлет

Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта ĕç планне кирлĕ пек тăваймаи пирки, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ĕçĕсене пĕлсе тăман. Çавăн пекех жнейкăсемпе кам ĕçлес тенĕ—çав ĕçленĕ. Çавна пула жнейкăсем час-часах çĕмĕрĕлнĕ. Ĕçшĕн ответлă пулса тăни пулман.

Кăçал ĕç планне тунă чухне пĕлтĕрхи йăнăшсене пĕтĕмпех шута илнĕ. Жнейкăсем, молотилкăсем çумне çынсем çирĕплетсе тухнă. Вĕсем мĕн ĕç пĕтиччченех çав машинăсемпе ĕçлеççĕ. Кунта кăçал кашни колхозник ăçта тата мĕнле ĕçре ĕçлемеллине пĕлсе тăрать.

Урапасем, шăналăксемпе михсем çителĕклĕ. Вĕсене вĕри шывпа çуса тасатса, дезинфекци тунă.

Тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра столовăй, ачасем валъъи ясли ĕçлемеле. Ку тĕлĕшпе мĕн кирлисене пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă.

Аслă Чакпа йунашар Кĕçĕн Чакри колхоз тырпулсене пухса кĕме начар хатĕрленет. Йалхуçалăх машинисене ку вăхăтченех йусаман. Кĕлте тÿрттарма урапасем çитмеççĕ. Витнĕ итемсем çук. Ĕç планне те туман.

Кĕçĕн Чакри колхозăн тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленесе çитмеле.

В. Андриянов.

„Пчелкино" колхоз хатĕр

Трак районĕнчи „Пчелкино" колхоз пысăк та ответлă ĕçе—тырпулсене уйран вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ. Тырпулсене пухса кĕме ĕç планĕ тунă. Пур хатĕрленÿлĕ ĕçсене те çав план тăрăх туса пыраççĕ.

Йалхуçалăх машинисене: жнейкăсене, молотилкăсене, лабогрейкăсене лайăх йусанă. Машинăсемпе ĕçлеме уйăрнă колхозниксем хăйсене çирĕплетсе панă машинăсене мĕнле пахалăхпа йусанине тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç.

Бригадăсенче звеносем тунă. Звеносенчи кашни çын хăйĕн ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Тырпулсене кăтартулăн пухса кĕме „Пчелкино" колхоз „Правда" колхозпа социализмлă ăмăрту договорĕ туса çирĕплетнĕ. Çакнашкал договорсем бригадăсем хушшинче те тунă.

Малтанхи паха тырра государствона пĕр чăрмавсăр памă итемсене тасатнă. Унта молотилкă майлаштарса лартнă.

П. Александров.

Колхозсем утă çулаççĕ

▪▪ Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз июлĕн 5-мĕшĕнче клевер çулса пĕтерчĕ. Пурĕ 18 гектар çулнă. Колхозри бригадăсем июлĕн 7-мĕшĕнче çаран утине çулма тухрĕç. Июлĕн 10-мĕшне 25 гектар çулнă. Халь колхозниксем утăна типĕтсе капана хывма тытăнчĕç.

А. Наумов.

▪▪ Çĕрпÿ районĕнчи „Заря" тата „Шумашар" колхозсем утă çулса пĕтерчĕç. „Заря" колхоз 30 гектар, „Шумашар" колхоз 25 гектар çулнă. Çак колхозсем утăсене пуçтарса капана хыврĕç.

Н. Мефодьев.

▪▪ ТĂВАЙ. Районри колхозсем клевер утине çулаççĕ. Вăрман хĕрринчи „Хĕрлĕ Сормово" колхоз 7 гектар, „Çăлтăр" колхоз 20 гектар, „Красная Чувашия" колхоз 19 гектар клевер çулнă.

Çак кунсенчех районри колхозсем çаран ути çулма тухаççĕ.

В. Ильин.

Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермеле

(ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контроль Комиççийĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченныйĕн материалĕсем тăрăх)

Куславкка районĕ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти июнĕн 23-мĕшĕнче „1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленинче тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнмĕн тумалине тĕплĕн кăтартса панă. Çавăн пекех Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ „Тырпул пухса кĕме хатĕрленессипе тырпулсене пăхса çитĕнтересси çинчен" июнĕн 16 мĕшĕнче йышăннă постановлени çинче те районсене конкретлă кăтартусем панă.

Анчах Куславкка районĕнче çав постановленисене райĕçтăвкомра та, райкомра та, çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем хушшинче те ку таранччченех сÿтсе-йавман, постановленисенче кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе халиччченех нимĕн те туман. Çавăнпа та ĕнтĕ, 1938 çулхи тырпула пухса кĕртме хатĕрленес ĕç районра пит начар пулса пынинчен нимĕн те тĕлĕнмели çук.

Машинпа-трактор станцинче пурĕ 10 комбайн. Вĕсенчен 8 комбайн çĕнĕ. 10 комбайнран виççĕшне çеç пушшăн ĕçлеттерсе пăхнă, комбайнерсем çитмен пирки ытти 7 комбайне ĕçлеттермен.

Комбайнерсем пурĕ 10 çын кирлĕ. Вĕрентсе хатĕрлени халь 3 комбайнер çеç, 7 çын халь курсра вĕренеççĕ. Çавăн пекех машиноведсем те çитмеççĕ. Пурĕ 17 машиновед кирлĕ, 7 çын вĕрентсе кăларнă.

МТС-цин молотилкăсем те хатĕр мар. 14 молотилкăран 10 молотилкă çеç йусаса çитернĕ.

Комбайнерсем çук пирки комбайнсене халь те участкăсем çумне çирĕплетмен. МТС директорĕ Салмин йултăш каланă тăрăх 3 комбайна колхозсем çумне çирĕплетнĕ, анчах комбайнерсенчен хăйсенчен ыйтсан, вĕсем ăçта ĕçлемеле пуласси çинчен халь те пĕлмеççĕ.

Колхозсенче те туса çитермен ĕçсем нумай йулнă. Кармăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра халь те ĕç планĕ туса çитермен. Пĕр жнейкă йусавсăр ларать. Уйра ахаль участкăсем çинче çеç мар, вăрлăх участкисем çинче те çумкурăксем нумай.

Çĕнĕ тырра йышăнма пĕр амбар та хатĕрлемен. Амбарсенче кашниччех пĕлтĕрхи тыррă выртать. Çавăн пекех витнĕ итемсене те тасатман, ăçта килнĕ унта улăмсем сапаланса выртаççĕ.

„Коммунар" колхозра та ĕç планĕ çук. Кунта кăçал комбайн ĕçлемеле. Комбайн валъъи халь те участкă суйласа хуман.

Каганович йачĕпе тăракан колхоз председателĕсĕр тăрса йулнă. Кивви ĕçлеме пăрахнă, çĕнĕрен суйлаçи ĕçе тытăнман. Кунта та план таврăш çук. Уйсенче утмăл турат калчасенчен те çÿлĕ ÿссе кайнă. Витнĕ итемсене тасатман, ампарсене те хатĕрлемен.

Карачри „III Интернационал" колхоз малта асăннă колхозсенчен аванрах ĕçлет. Анчах кунта та тырпулсене пухса кĕртнĕ чух кăмăн мĕн тумалине тĕллесе хуман. Кунта та амбарсене тасатса дезинфекцилесе хатĕрлемен.

Куславкка районĕнче ытти колхозсенче те тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçсем начар пыраççĕ. Чылай колхозсенче ĕç планĕсем çук. Çакă вăл пĕтĕмпех районри организацисем йертсе пыманнинчен килет. Çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Брусников йултăш, колхозсене тырпулсене пухса кĕме мобилизацилес вырăнне, хăйне ĕçрен хăтарма заявлени панă. Колхозсенче ĕç мĕнле пыни çинчен, мĕнле çитменлĕхсем пурри çинчен Брусников йултăш нимĕн те пĕлмест.

Райĕçтăвкомпа райкомăн малашне йалхуçалăх йенĕпе йертсе пырас ĕçре татăклă улшăну тумала.

Елĕк районĕ

Елĕк районĕнче суйа сведенисем парса улталас йăла халь те пĕтмен. Районĕпе пурĕ 156 жнейкă шутланать. Вăл шутран 126 машинă йусаса хатĕрлесе хунă, теççĕ çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен йултăшсем. Анчах та, тĕрĕслесе пăхсан, вĕсем кăтартнинчен чылай сахал йусанă. Акă, 6 колхоз тăрăх сводкăра 14 жнейкă, вĕсенчен 13 жнейкă йусанă шутланать. Чăннипе пĕртте апла мар. Çав 6 колхозра пурĕ 15 жнейкă, вĕсенчен 7 жнейкă çеç йусанă.

Тĕрĕсленĕ 6 колхозра тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕç çапла пырать:

Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра амбарсем те, витнĕ итемсем те хатĕр мар. Кĕлте турттарма 8 урапа çитмест. Михсемпе шăналăксене те хатĕрлемен.

„КИМ" колхозра машинăсене пурне те йусаса çитернĕ. Анчах витнĕ итемсене, михсемпе шăналăксене тата амбарсене тасатса дезинфекцилесе хуман.

„Доброволец" колхоз ыттисенчен аванрах ĕçлет. Ку колхоз „Хĕрлĕ Сормово" колхозпа ăмăртса ĕçлесе кăçалхи тырпула пухса кĕме аван хатĕрленнĕ. Витнĕ итемсене йусанă. Ĕçхатĕрсене пурне те хатĕрлесе хунă. Анчах жнейкăсе е йусаса çитереймен ха.

„Красный пахарь" колхозра 2 жнейкă йусавсăр ларасçĕ. Витнĕ итемсене те тасатман. Амбарсене дезинфекцилемен.

„Правда" колхозра та 4 жнейкăран 2 жнейкă çеç йусама ĕлкĕрнĕ. Колхозăн 15 урапа тата михсем нумай çитмеççĕ.

„Серп и молот" колхозра та машинăсене йусаса çитереймен 9 урапа çитмест.

Çавăн пекех МТС-ци те хатĕр мар. Кунта пурĕ 5 комбайн, вĕсене йусанă, анчах пĕрне çеç пушшăн ĕçлеттерсе пăхнă. Ыттисемпе ĕçлеймеççĕ, мĕншĕн тесен цепсем çитмеççĕ. Çĕнĕрен кÿрсе килнĕ 2 комбайна халъте пуçтарса майлаштарса çитермен.

Турхан районĕ

Тырпулсене пухса кĕрес ĕçе хатĕрленес ыйту тĕлĕшпе кунта июлĕн 4 мĕшĕнче колхоз председателĕсене тата бригадирсене — пурĕ 107 çын пухса канашлу туса ирттернĕ. Канашлу чылай çитменлĕхсене палăртрĕ, 43 колхозран пĕринче те тырпулсене пухса кĕртес ĕçе тĕплĕн хатĕрленсе çитеймен.

„Октябрь", „Красный луч", „Восток", Литвинов тата Молотов йачĕпе тăракан колхозсенче нихăшĕнче те витнĕ итемсене тасатса хуман. „Восток" колхозсăр пуçне ыттисенче нихăшĕнче те жнейкăсене йусаса лартман.

Чылай колхозсенче урапасем, михсемпе шăналăксем çитмеççĕ, амбарсене тасатса дезинфекцилемен.

Турхан районĕнче те тырпулсене пухса кĕмели ĕç планĕсем çук.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленессинчи çитменлĕхсене пĕтерме районри работниксене 7—10 кунлăха колхозсене йанă.

Шăнкăртам районĕ

Района кăçал, çĕнĕ МТС-цине, 5 комбайн кÿрсе килнĕ. Вĕсене халь пухнă, анчах та горючи çук пирки пушшăн ĕçлеттерсе пăхайман. Горючи çук пирки тракторсем те ĕçсĕр ларасçĕ. Комбайнерсене халь те штата илсе комбайнсене вĕсем çумне çирĕплетмен.

Машинпа-трактор станцинче ытти работниксем те çитмеççĕ. Директорпа механиксăр пуçне урăх никам та çук. Шăнкăртамри çĕнĕ МТС-цине Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе районри организацисем пысăк пулăшу памала.

Колхозсене илсен, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитменнисем Шăнкăртам районĕнче те чылай. Ĕç планĕсене чылай колхозсенче туман. Хăшпĕрисем амбарсене дезинфекциленĕ, анчах та вăл ĕçе тĕплĕн туса ирттермен.

∴

Кунта епĕр тăватă района илсе кăтартрăмăр Куславкка, Елĕк, Турхан тата Шăнкăртам районĕсем тăрăх кăтартнă çитменлĕхсем, паллах, ытти районсенче, ытти колхозсенче те пур. Тырпулсене пухса кĕрес вăхăт нумай йулмарĕ. Патăрйел районĕнче тепĕр ик-виç кунтан ыраш вырма тухаççĕ те. Çак кĕске вăхăт хушшинче пĕтĕм çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Районсенчи парти, совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен пĕтĕм вăйа хурса колхозсене тырпула пухса кĕме çак кунсенче хатĕрлесе çитме пулăшмала.

Самолетсем сахăр кăшманĕн калчисене çăлнă

Воронеж облаçĕнчи районсенчен пĕринче июнь уйăхĕнче улăх лĕпĕш хурчĕсем кĕтÿ-кĕтÿпе сахăр кăшманĕн калчисене тапăнма пуçланă. Улăх лĕпĕш хурчĕсем—йалхуçалăхне сиенлекен хăрушă тăшмансем пулса тăраççĕ. Улăх лĕпĕш хурчĕсем кĕтĕвĕпе сахăр кăшман плантаци патнеле пынă. Вунă пинлĕ гектар сахăр кăшман калчисен лаптăкĕсенче сиенлекен хурт-кăпшанкăсем нумайăн саралнă пулнă.

Çиенчех улăх лĕпĕш хурчĕсене пĕтерме мерăсем йышăннă. Сиенлекен хурт-кăпшанкăсем саралнă плантацисем çине Воронежри авиаци отрйачĕн самолечĕсене йанă.

Çанталăк самолетсене вĕçме çавтери йăвăр пулнă пулсан та, летчиксем ответлă задание вăхăтра пурнăçланă.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Профсоюзсен çуртĕнчи парткомăн ĕçĕ

Шупашкар хулинчи парторганизацин IV мĕш конференцийĕ профсоюз организацийĕсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пыманнине кăтартса хăварчĕ. Профсоюзсен ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх вăл—профсоюз членĕсене политикăлă воспитани парассине кирлĕ пек организациленменни, производствăра ĕç дисциплини мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслеменни тата культурăлă-массăлă ĕçе начар организацилени пулса тăрать.

Шупашкарти профсоюзсен çуртĕнчи партком йулашки вăхăтра профсоюзсен ĕçне лайăхлатса йарас тĕлĕшпе хула парторганизацин IV-мĕш конференцин решенисене коммуниссен пухăвĕнче сӳтсе-йавса решени йышăннă. Хаљхи вăхăтра вăл решенине пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнтан хускални курăнать. Уйрăмăнах РСФСР тата Чăваш АССР Верховный Совечĕсен суйлавне хатĕрленсе иртернĕ вăхăтра профсоюз членĕсем нумайĕшĕ хастарлăн ĕçленĕ, вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Акă, политçутучрежденисенче ĕçлекенсен профсоюзĕн членĕсем (республикипе) округри суйлав комиссийĕсенче членсем пулса 34 çын, участкăри суйлав комисси членĕсем пулса 63 çын ĕçленĕ. Агитаторсем пулса 174 çын ĕçленĕ. Çавăн пекех медицинăпа санитари работникĕсен профсоюзĕ те хăйĕн членĕсем хушшинче тата хулари, йалти халăх хушшинче культмассăлă ĕç организацилес тĕлĕшпе паллă çитĕнӳсем тунă.

Çитĕнӳсемпе лăпланса ларма йураманни пуриншĕн те паллă. Анчах, çапла пулсан та, профсоюз обкомĕсенче ĕçлекен хăшпĕр йулташсем ĕçе тĕпренех çĕнетсе çитерессине вăрахăн, пĕр васкамасăр илсе пыраççĕ-ха. Обкомсен ĕçри тĕп çитменлĕхĕ вăл—районсенчи (вырăнсенчи) организацисемпе лайăх çыхăнса ĕçлеменни, вĕсен пурнăçне тĕплĕн пĕлменни тата кирлĕ чухне тивĕçлĕ пулăшу параймани. Вырăнта ĕçлекен актива тĕплĕн пĕлмен пиркийĕх ĕнтĕ активиссем, тăрăшса, ударлăн ĕçлекенсем питĕ сахал курăнаççĕ. Политçутучрежденисенче ĕçлекенсен профсоюз Обкомĕн председателĕ Суров йулташ калавĕ тăрăх, районсенче тăрăшса, лайăх ĕçлекен профактив ытлах та сахал. Куславкка районĕнче — Матросов, Сĕнтĕрвăрри районĕнче—Сигаев, Тутаркас районĕнче—Смирнов, Шупашкар хулинче — Григорьевăпа Пласкина йулташсем. Сăмах та çук, политçутучрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕнче лайăх работниксем 5 çын кăна мар ĕнтĕ.

Профсоюз членĕсене канмали çуртсене, курортсене, санаторисене йарасси çулран çулах хăпарать. Профсоюз членĕсем хăйсен правипе усă кураççĕ, вĕсен активлăхĕ, пултарулăхĕ, обществăлă ĕçе хутшăнса ĕçлесси тата вĕренесси ӳссех пырать. Производствăра пĕтĕм хастарлăхпа тăрăшса ĕçлекен стахановецсемпе ударниксем сахал мар, вĕсен йышĕ куллен-кун нумайланать. Профсоюз организацисем малти вырăнта пулса, ĕçе пуçарса йертсе пымала.

Профсоюз членĕсем хушшинче хут пĕлменнисем пур тесен ĕненес те килмест, анчах, питĕ шел, вĕсем пур-ха. Çавăн пекех хут сахал пĕлекеннисем те пайтах. Профсоюз организацийĕсем хутпĕлменлĕхе тата хут сахал пĕлнĕлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса хастарлăн ĕçлени курăнмасть-ха. Тата та ытларах, хăшпĕр Обкомсем хăйсен организацийĕнче хутпĕлменнисем миçе çын иккенне те пĕлмеççĕ.

Профсоюз обкомĕсем лайăх ĕçлесе пырасси вăл партком мĕнле ĕçленинчен килет. Обкомсенче ĕçлекен коммунис руководительсем партком кăтартăвĕсене вăхăтра пурнăçланине çийĕнчех тĕрĕслесе, вĕрентсе пыни ĕçе лайăхлатма пулăшать. Анчах партком халĕ те çавна ăнланса илеймен пулас. Вăл коммуниссен пухăвĕсенче тата партком ларăвĕсенче йышăннă постановленисене уйрăм коммуниссем мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслемест. Июнĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухура комсомол организаци начар ĕçленине палăртса, ĕçе лайăхлатмалли çийĕнчех кăтартусем парса хăварнă. Çав постановлени пайан кун та пурнăçланмасть-ха. Комсорг пулса ĕçлекен Николаев коммунист март уйăхĕнчен вара комсомолецсене пустарса пĕр пуху та туса иртермен. Яковлев йулташăн комсомолран парти кандидатне кĕме рекомендаци ыйтса панă заявленийĕ икĕ уйăх хушши Николаев портфлĕнче выртнă. Комсомол организацине ĕçре пулăшса пыма уйăрнă коммунис Кармишин йулташ та нимĕн ĕçлемесĕр, комсомол организацине пулăшмасăр пурăнать. Çак йĕркесĕрлĕхсене партком секретарĕ Базанов йулташ пĕлсе, курса тăрать пулин те, Николаевпа Кармишин йулташсем çинчен ыйту лартса, çав йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть.

— Ей, мĕн калаçмали пур унта... Николаевпа Кармишин йулташсене темиçе хутчен те каланă ĕнтĕ, вĕсем мана итлемеççĕ,—тет Базанов йулташ, аллине сулса. Ку тĕслĕх профсоюз çуртĕнчи парторганизацинчи хăшпĕр коммуниссем дисциплинăна çухатнине палăртать. Ку анчах мар. Базанов йулташ каланă тăрăх профсоюз обкомĕсенче ĕçлекенсен хушшинче ĕç дисциплини çирĕппех пулманни те паллă. Дисциплинă начарланасси ăçтан тухса тăнине Базанов йулташ калама пултараймасть. Ун шухăшĕпе профсоюз çуртĕнче 16 обком вырнаçнинчен, вĕсем хăйсен ĕçĕнче пĕр-пĕрне пăхăнса тăманнинчен дисциплинă начар тăрать мĕн. Ку, паллах ĕнтĕ, тĕрĕс мар шухăш. 13 обкомра руководительсем пулса коммуниссем ĕçлеççĕ. Партком мĕн пур ĕçе коммуниссем урлă тата партире тăман активиссем урлă туса пымала. Партком партире тăман большевиксен хушшинче политикăлă воспитанилĕ ĕçе организацилемен, хаљхи вăхăтра кунта нимĕнле кружок та ĕçлемест.

Партире тăман активиссен хушшинче партилĕ-политикăлă ĕç организацилемен çĕрте парти ретне çĕнĕрен çынсем кĕме пултарайманни паллă. Çавăн пекех кунта та пĕр çулталак хушшинче пĕр çынна та парти ретне илмен, сочувствующисемпе ĕçлесси те начар тăрать.

Профсоюзсен çуртĕнчи парткомăн ĕçне тĕпренех çĕнетсе йарса, çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтермеле.

Н. Косойкин.

Йĕпреçри парткабинетра

Коммуниссен активлăхне ӳстерес, вĕсене политикăлă воспитани парас ĕçре парткабинетăн пысăк вырăн йышăнмала. Çакна асра тытса Йĕпреçри парткабинет хăйĕн ĕçне çулсеренех лайăхлатма тăрăшать. Малтанах парткабинетра учебниксем, тĕрлĕрен литературă сахаллччĕ. Епĕр кăçалхи 6 уйăх хушшинче икĕ пин тенкĕлĕх кĕнекесем илсе килтĕмĕр. Парткабинетран кĕнеке илсе вулакансен хисепĕ ӳсрĕ: вулакансем 113 çын пулнă пулсан, хаљ 200 çын ытла вулаççĕ.

Парткабинет политикăлă пĕлӳ тĕлĕшпе йулса пыракан коммуниссене мала тухма пулăшать. Акă, сăмахран, Бурмистрова йулташ халиччен политикăлă ыйтусене начар пĕлнĕ, активлăхĕ çителĕксĕр пулнă. Кăçал вăл политграмăтă кружокĕнче вĕренет, заљятисене вăхăтра, тĕплĕн хатĕрленсе пырать, пĕлмен ыйтусене парткабинета пырса ыйтать. Бурмистрова йулташ парткабинета час-часах кĕнеке-журналсем вулама çӳрет. Кăçал вăл илемлĕ литературă кĕнекисене нумай вуласа тухрĕ. Халĕ Бурмистрова йулташа районри ĕçе, райархив пуçлăхне лартрĕç.

Çĕнĕрен килнĕ кĕнекесене кăтартас тесе кăçал 5 хутчен кĕнеке выставки организациленĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховный Совечĕсен суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче агитаторсем валљи кашни 10 кунта семинар туса пынă тата 34 агитатора курс организацилесе вĕрентсе кăларнă.

Парткабинетăн çитменлĕхĕсем те пур-ха. Йулашки вăхăтра пропагандиссемпе агитколлектив руководителĕсен семинарĕсем вăхăтра пулса иртмеççĕ. Политкружоксенче вĕренмели учебниксем, уйрăмăнах парти историне вĕренмели учебниксем питĕ сахал. Хĕллехи вăхăтра коллективлă радиолекци итлекенсене организацилеччĕ, анчах халĕ вăл ĕç сӳнсе ларчĕ, радиоприйомник ĕçлемест.

Ф. Захаров.

Çĕнĕ заводсене, шкулсене, ытти стройкăсене вăхăтра тăвасси—партипе совет организацисен пысăк ответлă ĕçĕ

Хамăр республикре çĕнĕ стройкăра Галимов йултăш йертсе пыракан рабочисен бригади ĕçре йаланах паха тĕслĕхсем кăтартса пырать. Унăн бригади кашни кунах плана пахалăхпа х. сеп йеппе ытлашипех тултарса ĕçлет.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Бригадир Г. Х. Галимов йултăш.

Çĕнĕ стройкăна ĕçлеме чи малтанах хăйĕн бригади членĕсемпе Николай Павлович Сидоров йулташ пычĕ. Халĕ унăн бригади малта пыракансенчен пĕрийĕ шутланать, ытти бригадăсене пример кăтартать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. П. Сидоров йулташ.

Çамрăксем çĕнĕ стройкăсене ĕçлеме кайаççĕ

Кăçал пирĕн республикре тума тытăннă фабриксемпе, заводсен строительствисене колхоз çамрăкĕсем пысăк хавасланхпа ĕçлеме кайаççĕ. Шăхасан районĕнчи „Правда“, „Интернационал“ тата Сталин, Куйбышев, Шмидт йачĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем 50 çын çĕнĕ стройкăсене ĕçлеме кайрĕç. Вĕсем республикăри комсомолецсемпе çамрăксем патне йыхрав çырура çапла çыраççĕ:

„Епĕр пайан 10 çамрăк пысăк хавасланхпа çĕнĕ стройкăсене ĕçлеме кайатпăр. Çĕнĕ заводсем, фабриксем, чугунçул тата ытти промышленность предприятисем тунă ĕлĕк кайа йулнă, халĕ чечекленекен пирĕн республикшăн çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Халĕ епĕр колхозниксем, нумай вăхăт иртмĕ—епĕр промышленностьри рабочисем пулатпăр. Епĕр Орденлă Чăваш республикĕнчи комсомолецсене, çамрăксене çĕнĕ предприятисем тăвас ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеме чĕнетпĕр.

Шкул строительстви кайа йулать

Тепĕр уйăх çурăран çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать. Çак кĕске вăхăтра пирĕн республикăри йалсенче 31 шкул çурчĕ, хуласенче 2 шкул çурчĕ туса ĕлкĕртмеле. Асăннă шкулсенчен 16 шкул çуртне иртнĕ çулсенчех тума пуçланă. Вĕсем кăçалхи июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурте хатĕр пулмала, анчах пайанхи куна, Апашри тата Милютин заводĕнчи шкулсемсĕр пуçне, пĕрин пирки те хатĕр тесе калама çук.

Кăçал йалсенче çĕнĕрен 15 шкул çурчĕ тума палăртнă. Çĕнĕ объектсем тăрăх ĕç тата йапăхрах пырать. Кунта халĕ чи кирлĕ „организацилĕ“ ĕçсене те туса пĕтермен. Районри стройтехниксем нумай шкулсем валљи халĕ техникăлă сметăсем те туман. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 15 шкулран пайанхи куна пĕр Тăвай районĕнчи Альдиарово шкулĕн сметине çеç пăхса тухса çирĕплетнĕ, ытти районсем хăйсен сметисене правительство патне çитермен.

Проектсем пирки те çавнашкалах пăтраштарусем питĕ нумай. Трак районĕнчи Упи шкулне 1937 çулта тума пуçланă, анчах шкулăн проекчĕ те смети те çук. Шкул проекчĕсене Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ыйтнă тăрăх „Чăвашпроект“ ӳкерсе памала. Упи шкулĕн проектне тăвас ĕçе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн строительствă пайĕ тепле майпа хăй çине илнĕ те, иккĕмĕш çул ĕнтĕ аппаланать, анчах йурăхлă йапала туса параймасть. Шкула 1937 çулта ӳкернĕ проектпа тума тытăннă, кăçал ку проекта пăрахăçласа Павлов техник çĕнĕ проект тунă, анчах ăна та эксперт совечĕ йышăнман. Çапла вăра техниксем панкавланса ĕçленĕ пирки шкула проектсăр, сметăсăр-менсĕр, алсĕмĕпе тенĕ пек тăваççĕ.

Чылай райĕçтăвкомсем шкул тăвас ĕçе районри техниксем çине йăвантарнă та вĕсене тĕрĕслемеççĕ те, пулăшмаççĕ те. Çак тимсĕрлĕхе пула хăшпĕр техниксем пуçĕпех йулхавланнă. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Патеев техник халĕ строительствăн чи хĕрӳлĕ тапхăрĕнче отпуска тухса кайнă. Ĕççыннисем шкул çурчĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне ĕлкĕртме васкаççĕ, вĕсем техникĕ кĕтсе тăмаççĕ, шкулсене хăйсен аллипе мĕнле пĕлнĕ çапла тăваççĕ. Николайскинче шкул çуртне тăвас ĕçе (кам тетĕр?) шкул сторожĕ йертсе пырать. Штанашра техник вырăнче кăмака ăсти Громов ĕçлет. Кун пек чух строительство пахалăхĕ мĕнле пуласси каламасăрах паллă ĕнтĕ.

Йĕпреç районĕнче те шкулсемшĕн хыпăнсах çунмаççĕ. Ытларах та, кунта шкулсенчен куçкĕретех мăшкăлаççĕ. Чурачăкпа Буинск шкулĕсене тума 4.000 тенкĕ тӳлесе илнĕ йăвăçсенчен, райплан (Скворцов) çырса панă тăрăх, райлесзаг пуçлăхĕ Емельянов 150 кубла метр йăвăç „Пионер“ завода сутса йанă. Пĕрре сутнă йапалана тата тепĕр хут сутма ыгла та пысăк сĕмсĕрлĕх кирлĕ. Емельяновăн ку сĕмсĕрлĕх çитнĕ пулас, вăл государствона хирĕçле ĕç пĕр çӳçенмесĕрех тунă. „Пионер“ заводрисем те пĕр именсе тăмасăрах, чи паха йăвăçсене суйласа илсе, виçĕ кун хушшинче 100 кубла метр туртса кайнă.

Йури и, йури мар-и тунă ку ĕçе, анчах вăл государствона хирĕçле, сăтăрла ĕç, уншăн тивĕçлĕ çынсем çирĕп ответ тытмала.

Пĕтĕм республикĕпе илсен, шкул строительстви пысăк хăрушлăх умĕнче. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ строительствăна йертсе пымасть. Кунти çынсем строительствă мĕнле пынине сводкăсем тăрăх кăна пĕлеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссарĕ Осипов й-ш районсене кайса килнĕ, анчах вăл строительствăна малала йарас тĕлĕшпе татăклăн нимĕн те туман.

Шупашкарта, Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе йунашарах тенĕ пек, 880 вырăнлă шкул тăваççĕ. Анчах Стройтрест та, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те ку шкулшăн кирлĕ пек вăй хурса тăрăшмаççĕ.

Хăшпĕр çĕрте халĕ: вăхăт нумай йулмарĕ, шкулсене пурпĕрех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас тĕле ĕлкĕртес çук, тесе калаçма пăхаççĕ. Паллах, кун пек сӳрĕк ĕçлесен нимĕн те тума çук.

Ĕçре чăн-чăн большевик пулмала. Пирĕн ĕççыннисен активлăхĕ пысăк, уйрăмах пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ вĕсем шкул тунă çĕрте. Шкул вĕсене, вĕсен ачисене ăслăлăх, культурă парать. Ĕççыннисен активлăхне большевикла мобилизацилесе, йулнă вăхăтпа туллин усă курса, çĕнĕ шкул çурчĕсене вĕренӳ çулĕ пуçланас тĕле пурне те туса ĕлкĕртмеле.

Çутĕç Халăх Комиссарĕн, райĕçтăвком председателĕсен шкул строительствине йертсе пырас ĕçе хăйсем çине илмеле.

Китайăн нацилĕ-политикăлă совечĕ

Июлĕн 6-мĕшĕнче Ханькоура Китайăн нацилĕ политикăлă совечĕ уçăлнă. Ку вăл—Китай историнчи пысăк событи. Китай халăхĕн Японии захватчикĕсене хирĕç пыракан нацилĕ ирĕклĕх кĕрешĕвĕнче вăл совет калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрасси паллах, ун пирки нимĕн иккĕленмели те çук.

1937 çулхи июль уйăхĕнче Японии империализмĕ хăйсен Китайри агрессин çĕнĕ сыпăкне пуçланичченех-ха, Китай правительстви нацилĕ собрани пухма шутланă,—ăна пурте пĕлеççĕ. Хаљ пухăннă нацилĕ-политикăлă совет унтан урăхларах, кунта Гоминдан представителĕсенчен пуçне тата ытти партисен представителĕсем те кĕреççĕ. Вăл совета Китайри коммунисла партин йертсе пыракан 7 деятелĕ кĕреççĕ, вăл шутра: Мао Цзе-дун, Ван Мин йулташсем т. ыт. те. Кунсăр пуçне тата, нацилĕ-политикăлă совет составне Китайри политикăлă, обществăлă ĕç деятелĕсем, писательсем т. ыт. те нумай кĕреççĕ. Советра Китайри пур провинцисемпе хуласен представителĕсем те пур. Совет членĕсен хушшинче—9 хĕрарăм.

Çапла вара, нацилĕ-политикăлă совет пур йĕнчен те Китай халăх представителĕсен органĕ пулса тăмасть пулсан та вăл—чăн-чăн халăх представительстви тăвас çул çинче малала чылай пысăк утăм туни пулса тăрать. Нацилĕ-политикăлă совет—Японийе хирĕç нацилĕ пĕрлĕхлĕ фронта çирĕплетес тата анлăлатас çул çинчи пысăк тă паха тапхăр. Японии захватчикĕсене хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешес тĕлĕшпе çĕршыври пĕтĕм вăйсене малала татах пĕр çĕре пĕрлештерес ĕçре вăл пысăк вырăн йышăнса тăрĕ, ун пирки иккĕленмели çук. Çав вăхăтрах çак совета пухни хăйех те Японийе хирĕç нацилĕ пĕрлĕхлĕ фронт халех мĕнле пысăк, хăватлă вăй пулса тăнине кăтартса парать.

Японийе хирĕçле нацилĕ пĕрлĕхлĕ фронта тата вăл фронтăн тĕп сыпăкне—Гоминданпа компарти пĕр кăмăллă пулса ĕçленине—çирĕплетни тата анлăлатни, Китай халăхĕн Японии пусмăрçисене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн ăнăçлăхне татса паракан услови пулса тăчĕ.

Китай вăрçа çарпа экономикă тĕлĕшĕнчен хатĕрленменнипе кĕтсе илчĕ. Апла пулсан та, Китай чи кĕске срокра, чи йăвăр условисенче те малтан тумасăр йулнине туса çитерме, пĕтĕм çĕршыв тулти тăшмана хирĕç тăрса кĕрешессине организацилеме пĕлчĕ.

Кĕрешӳре иртнĕ çул хушшинче Китай çар тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Хаљ ĕнтĕ Китайăн пĕрлĕхлĕ çар, чăн-чăн халăх çарĕ пур, вăл çар тĕпри асла командованине пăхăнса тăрать. Дисциплинăна çирĕплетнĕ, боецсен çапăçма пултарас хăватне тата политикăлă ăнлануне çĕкленĕ. Китай çарĕсен стратегипе тактики те чылай улшăнчĕ. Çара кирлĕ чухне пĕрмайах çĕнĕ вăй пырса тăрать.

Японии империализмĕн планĕсем Китайри вăрçа хăвăрт пĕтерме палăртса хунă планĕсем пĕтĕмĕшпех ишĕлсе анчĕç. Японии военщини Китай çарĕсен чĕрĕ вăйне пĕтерсе хураймарĕ, Китай халăхĕн тăшмана хирĕç кĕрешес ирĕкĕпе хăватне хуçаймарĕ. Йăлтах урăхла, Китай халăхĕн кĕрешес кăмăлĕ кунсерен ӳссе çирĕпленсе пырать.

Тăшмана хирĕç çитĕнӳлĕн кĕрешме кирлĕ тĕп условисене Китай туса çитернĕ ĕнтĕ. Троцкисла бандитсем тата ытти тĕрлĕ предательсем—Японии империализмĕн агенчĕсем тем тĕрлĕ киревсĕр ĕçсем тăваççĕ пулсан та, компартипе Гоминдан хушшинчи пĕрлĕх фрончĕ çирĕпленсе, анлаланса пырать. Ку ĕнтĕ татăклă çĕнтерӳ тума кирлĕ тĕп услови пулса тăрать. Китайăн нацилĕ ирĕклĕх кĕрешĕвĕнче пĕрлĕх фрончĕ çавтери кирлĕ иккенне пурнăç хăйех кăтартса пачĕ. Гоминданăн инçерех куракан представителĕсем çакна ĕнтĕ ăнлансах пыраççĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнче ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Китай çар совечĕн председателĕ Чан Кай-ши çапла каланă: „Пĕрлĕхлĕ пулни, пĕр çĕре чăмăртанса тăни хаљ Китайа нихăçанхинчен те кирлĕрех... Фактсем çакна кăтартса пачĕç: наци умĕнче тăракан задачăсене компарти пĕтĕмĕшпех те туллин ăнланать тата çĕршыва пĕрлештерес, хăтарас ыйтусенче хăй чĕререн тӳрĕ пулнине кăтартать. Йулашки вăхăтра тăшман усал хыпарсем сарать, провокацилĕ ĕçсем туса пырать, кунтан паллах тĕлĕнмели çук. Тăшманăн çак ĕçĕсене хирĕç ответлесе, тата ытларах пĕрлешĕнес пулать тата унăн тăрăшăвĕсем усăсăр иккенне кăтартса парас пулать“.

Паллах, Китайа татах сахал мар йăвăрлăхсем, йăвăр испытанисем кĕтеççĕ. Анчах Китай халăхĕ хăйĕн вăйне, хăй татăклăнах çĕнтересе пĕтĕмĕшпех шанса тăрать. Вăл çĕнтерӳ пуласса шантаракан ни вăл—Японийе хирĕçле пĕрлĕхлĕ наци фрончĕ çирĕпленсе сарăлса пыни пулса тăрать. Ханькоура чи пуçласа пухăннă нацилĕ-политикăлă фронт ку тĕлĕшрен сăмах та çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Я. Максимов.

„Правда“.

Китай вăрăм вăрçа хатĕрленни

Йулашки вăхăтра Китайăн хĕвеланăç провинцисенче промышленность вăйлăн ӳссе, аталанса пырать. Промышленность предприятийĕсем вăйлăн çитĕнеççĕ, çулйĕр вăйланать, йалхуçалăх бази çирĕпленет. Вăрăма тăсăлакан вăрçă,—промышленность ӳссе пынине ыйтать, Китай ăна аталантерса пырать те.

„Шанхай Таймс“ йатлă хаçат кун пирки çапла çырать: „Китайăн кăнтăрпа хĕвеланăçĕ хаљхи вăхăтра Пĕрлешӳлĕ Штатсен хĕвеланăç пайĕсем чечекленсе пынă пек чечекленсе пырать, тесе калама пулать. Хĕвеланăç Китай пысăк вырăн йышăнса тăракан снабженин пысăк складне тăвать“.

Империализла пуç пулса тăракансен влиянийĕпе Китай экономикă йенчен империализла державăсен аграрлă—сырьелă базă пек çеç ӳссе пынă. Инçетри провинцисенчи пуйанлăхсем усă курмасăрах выртнă. Вăрăма тăсăлакан вăрçă çулĕ çине тăрсан, Китай çав провинцисене оборонăн экономикăлă бази тума тытăнчĕ.

Сычуань, Юньнань, Гуйчжоу, Сикан тата Хупань — кăнтăр-хĕвеланăç провинцисенче,— промышленноçă, йалхуçалăхне вăйлатма пур майсем те пур.

Хупаньре—сурьма, цинк, тăхлан, çĕр кăмрăкĕ, марганец, кĕмĕл, тимĕр руди; Хубейре—пăхăр, ылтăн, тимĕр руди; Гуйжоура—ылтăн, ртуть запасĕсем (ку тĕлĕшпе пĕтĕм Китайĕпе пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать), нефть, çĕр кăмрăкĕ, тимĕр руди, вольфрам тата ыт. те пур.

Çакăн пек инçетри Юньнань тата Сикан провинцисенче те йулашки вăхăтра çĕршывăн пуйанлăхĕсене тупса палăртнă. Сикан Лю Вэньхуэй провинцине вăйлатас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет председателĕ çапла пĕлтернĕ: „Сикан провинцинче калама çук пысăк пуйанлăхсем пур. Провинцинче ылттăн, пăхăр, тимĕр руди, слюда нумай. Нефть запасĕсем çав тери пысăк, вĕсем нумай çĕршывсене темиçе çул хушши кирлĕ чухлĕ нефть парса тăнă пулĕччĕç.

Юньань провинци пăхăр, кĕмĕл, ылттăн, тăхлан, асбест тĕлĕшĕнчен пуйан. Рейтер агентствин сăмахĕ тăрăх, унăн çĕршывăн экономикинче пысăк вырăн йышăнса тăмала.

Китайăн культурăпа политикăлă тата экономикăла пурнăçĕ Китайăн шалти районĕсене куçса пырать. Ĕлĕк сахал йышлă пулнă промышленнось предприятийĕсем çар аллине куçса пыраççĕ. Çар промышленноçĕн çĕнĕ предприятийĕсене тăваççĕ.

Сычуань провинцинче Китай правительстви пир-авăр, хут фабрикĕсем тата сахăр завочĕсем лартма шутлать. Шалти провинцисенче паровозсене йусамалли заводсем тума, телеграф тата телефон оборудованисене тăвакан завод тума проект тăваççĕ. Хубэй тата Изянси провинцисенче Китай правительстви чей промышленностьне çĕнетет.

Китайăн чылай фабрикĕсем, завочĕсемпе мастерскойĕсем, тăшмансем йышăннă вырăнта йулас мар тесе, хăйсен оборудованисене Китайăн шалти провинцисене куçарнă. „Норт чайна дейли ньюс“ йатлă хаçат çар ĕçĕсем пуçланнă вăхăтра Китайри 200 фабрикăн машинăпа ытти оборудованисене Чунцине, Ичана, Гуйлина тата Юньнане куçарнă. Шаньдун провинцин кăнтăр пайĕнче вырнаçнă Чжунсинри çĕр кăмрăк кампанийĕ вăрçă ĕçĕсем пуçланаччен пĕр ерне малтан шахтă оборудованисене Китайăн хĕвеланăç йенне куçарнă. Шахтă оборудованисене куçарнипе пĕрлех компани хатĕрленĕ çĕр кăмрăк запасĕсене те Чунцине тата Ханькоуна куçарнă.

Шалти провинцисен пуйанлăхĕсемпе усă курас тата Японийе хирĕç нумай вăхăт хушши вăрçма запас хатĕрлес тĕлĕшпе Китай правительстви çулйĕрсем тума кирлĕ мерĕсем йышăннă. Хаљхи вăхăтра кăнтăр-хĕвеланăç провинцисенче çулйĕр тăвас ĕç анлăн саралса пырать. Китай тата йут çĕршывсен пичечĕ кăтартса панă тăрăх, вăрçă пуçланиччен темиçе уйăх малтан шоссе çулĕсене, вăрçă пуçланиччен 10 çул хушшинче тунă чухлĕ тунă.

„Саотанбао“ йатлă хаçат, çулйĕр планĕ тăрăх Хубэй провинцинче 7 пин километр тăршшĕ çул тумала тесе пĕлтерет. Хаљхи вăхăтра 4 пин километр тăршшĕ çул тунă та ĕнтĕ.

Чугун çула тунипе тата шоссе çулĕсене йышлатса пынипе пĕрлех, хаљхи çулйĕрсене тата шыв транспортне лайăхлатма мерăсем йышăнаççĕ.

Центрти тата провинцисенчи властьсем шалти провинцисенче продовольстви базисем тăвас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çавна май хресченсем хушшинче пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Çĕршывра „продовольстви культурисене ытларах акмала“ текен лозунг паллă лозунг пулса тăнă. Правительство тата провинцисенчи организацисем йалхуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе хресченсене пулăшаççĕ. Сăмахран, акă, тырпулсем акнă лаптăксене лайăхлатма, çĕре çемçетмели йапаласем илме тата ирригаци ĕçĕсене тума Хунань банкĕ 6 мĕлйун доллар укçа кивçен панă. Сычуань провинцинче—çак çулте вейннă ĕçсене тумах 10 мĕлйун доллар, Гуандун провинцинче—3 мĕлйун доллар памала тунă. Провинцисенчи властьсем йатарласа кăларнă приказпа Ватасĕр Китайра опиумлă мăкăньпе табак акма чарнă. Пушанакан лаптăксене тĕштырăсем акмала. Çак ĕçсене туса иртерни май продовольстви культурисене акасси ӳсет.

Çак пур мероприятисем экономикăн çирĕп базине тума пулăшаççĕ, Китайăн сыхлăх ĕçне пĕр виçесĕр вăйлатаççĕ.

Шомин.

Йут çĕршывсенчи пурнăçра йăласем

Румыни чугунçулĕсем çинче пулнă ĕç

Англири „чухунсул журналĕ „Рейлуэй Газет“ пелтернĕ тăрăх, Румыни парламенчĕн йулашки суйлавĕсем вăхăтĕнче пĕр ĕç пулса иртнĕ. Вăл ĕç буржуала правительство хашшĕн йурахла мар оппозицине хирĕç суйлавра мĕнле мелсемпе кĕрешнине пит те уççăн кăтартса парать.

Румынири оппозицийĕ Нацилĕ Хресчен Партин лидерĕ Маниу çĕршыв тăрăх агитаци туса çÿренĕ. Пуйăс Клуж станцине çур сехет хушши чарăнса тăнă вăхăтра вăл вокзал умĕнче организациленĕ митингра хăйĕн суйлавсем умĕнче туса калаçма шут тытнă. Анчах Маниу хăй сăмахĕнче правительствона критиклеме тытăнсан кашничех чугунçул администрацийĕ (ăна малтанах тивĕçле кăтартусем парса хунă ĕнтĕ) паровозсене кăшкăртма тытăннă. Паровоз гудокĕсем вăра оратор сассине пĕтĕмпех хупласа хунă, кунсăр пуçне тата станци начальникĕпе машиниста пуйăса расписани çинче кăтартнинчен 10 минут маларах, пĕр свисток памасăр нимĕн систерсе тăмасăр кăларса йама приказ панă пулнă. Пуйăс кĕтмен çĕртен тапранса кайнине курсассăн, Маниу калаçма чăрăннă та пуйăс çине ларма чупнă.

Америкăри конгрес членĕ—негр Артур Митчель Америкăри Перлешÿлĕ Штатсен кăнтăр йенне кайнă чух, ăна Арканзас штатĕнче вăйпах 1-мĕш класлă пульмановски вагонран „цветной“ вагона, йатарласах негрсене лартса çÿреме уйăрса хунă вагона куçарса лартнă. Артур Митчель конгреса жалăба панă. Унта вăл çав çул çинче негрсене питте чыссăр услови сенче лартса çÿретеççĕ, тенĕ.

Негрсĕнĕ те ытти пассажирсемпе пĕр пек условисенче лартса çÿремеле тутарма конгресăн чукунçула хушас пулать, тесе ыйтнă Митчель.

Америкăри конгресс, çак заявленине пăхса тухса, çакăн пек решени йышăннă „Пульмановский вагонсемпе, пуйăссенчи ресторансемпе тата салонсемпе усă курма пурнăçра „цветной“ пассажирсен нумайăх маррине шута илсе, пуйăссене хура утлĕ пассажирсем валли йатарласах çавăн пек вакунсем кĕртни усăлă пулмасть, тесе шутлас. Çакна шута илсе ĕнтĕ, хура утлĕ пассажирсене лартса çÿреме тунă хăйхи вăхăри йĕркĕсене тĕшмĕш тесе йе тÿресĕрлĕх тесе шутлама май çук“.

(„Рейлуэй Эдне“).

Испанири вăрçă

Левант фронтĕнчи июлĕн 2-мĕшпе 10-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни

Левант фронтĕнче вăрçă ĕçĕсем иртнĕ ерне хушшинче, тĕпрен илсен, 150 километр тăсăлакан фронтра—Теруельтен пуçласа Ватаçĕр тинĕсĕ патне çитиччен пулса пынă. Пăлхавçăсен тĕллевĕ—Сегунто çине наступлени тăваси пулнă. Анчах, пăлхавçăсемпе интервентсен наступленийĕ ăнăçлăн пулман.

Наступлени туса пынă чухне пăлхавçăсемпе интервентсем артиллери, авиаци тата танксем хытăн пулăшса пынă пулсан та, вĕсем калама çук пысăк çухатусем тунă. Йулашки сакăр кун хушшинче пăлхавçăсемпе интервентсем 10 пин çын вилнĕ. Республиканецсен вĕсенинчен ултă хут сахал пĕтнĕ.

Пăлхавçăсен Мора де Рубиелос çине темиçе хутчен те атакăсем тунă. Анчах вĕсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă. Халĕ ĕнтĕ пăлхавçăсемпе интервентсем Мора де Рубиелос çине тÿрех пырса атакă тума пăрахнă пулас, вĕсем ку районта республиканецсен позицисем патне йĕнчен çавăрăнса пыма хăтланаççĕ.

Йулашки вунă кун хушшинче хайăр çапăçусем Секо шывĕ патĕнче пулса пынă, пăлхавçăсем кунтан Сагунто патнеле малала кайма тăрăшаççĕ. Çавăн пекех пăлхавçăсем Валь де Уксо—Альгар чугунçулне те татса тухасшăн. Ку плана пурнăçа кĕртесси вĕсенчен пулас çук, мĕншĕн тесен республиканецсем вĕсене хирĕç пысăк паттăрлăхпа вăрçаççĕ. Секо шывĕн тури тÿремлĕхне республиканецсем йышăннă, çакна пула пăлхавçăсене хĕвеланăçĕрен Вильявиехана каймалли çула картласа лартнă.

Çав шыв çывăхĕнчи районра республика çарĕсем Нулес йатлă йалтан (Кастельонтан кăнтăр йеннеле) туха малтанах хатĕрленĕ позицисем патне куçнă. Фашиссен авиацийĕ Нулес йатлă йала йăлтах шăлтерсе тăкнă.

Республиканецсен Теруель—Кастельон фрончĕн сылтăм флангĕнчи оборонă системи пăлхавçăсен наступлени туса малала кайас çулне картласа тăрать.

(ТАСС).

„Торпедо“ футбол команди Мускава таврăннă

Июлĕн 10-мĕшĕнче „Торпедо“ футбол команди Францирен Мускава таврăннă. Вăл Франции рабочисен спорт федерацийĕ 30 çул тултарнă йатпа Парижре пулнă уйавра хутшăнса выльнă. Командă выступленисем ăнăçлăн пулса иртнĕ.

Францире совет футболисчĕсем тăватă матч выльнă: Парижре—Чехословаки тата Норвеги футболисчĕсемпе, Ниццере—Франции рабочисен командипе тата Марсельре—Барселонăри сборный командăпа. Тăватă матчре те совет футболисчĕсем выльса илнĕ. Вĕсем 34 хутчен мечкă тапса кĕртнĕ, хăйсене пĕр хут кĕртнĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Вăтам Китайра июлĕн 7-мĕшĕнче çĕрле Хукоуран хĕвелтухăçĕнерайонта çав тери пысăк çапăçу пулса иртнĕ, ун пек çапăçу Янцзы йухăншывĕ патĕнче вăрçăн вăхăтра халиччен те пулман. Японецсен çав çапăçура 1000 салтака йахан вилнĕ.

Июлĕн 8-мĕшĕнче Китай самолечĕсем Японин позицийĕсем çине темиçе хутчен те ăнăçлăн тапăннă. Аньцинри аэродромра Японин 50 самолетне çĕмĕрсе тăкнă. Çав районсем бомбăсем пăрахнипе Японин пилĕк караппе хыттăн сиенленĕ.

Июлĕн 9-мĕшĕнче Японин 20 самолечĕ Наньчен çине (Цзянси провинции столици) 80 бомбăна йахăн пăрахнă. Бомбăсем пысăк сиенех тăвайман.

Çурçĕр Китайра, Хэвань провинцин çурçĕр пайĕнче Японин 2 пин çынлă çарĕ Цзиюань çине атакăлать. Китай командованийĕ çав районе пысăк подкреплениесем илсе пынă. Японецсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă.

Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче 8 пин японец васкасах Цзочуйжоуран хĕвеланăçнеле куçаççĕ.

Японецсен Линфынрен хĕвеланăçнеле туса пыракан наступленине чарса лартнă.

(ТАСС).

„ВРАГИ“ ЙАТЛĂ ÇĔНĔ ФИЛЬМ

„Ленфильм“киностудийĕ А. М. Горький „Враги“ произведенийĕ тăрăх çĕнĕ фильм ÿкерет.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикăн халăх артисĕ В. Гардин Печенегов генерал ролĕнче тата республикăн тава тивĕçлĕ артистки С.Э. Магарил Татьяна Луговая ролĕнче.

Союзфото („Прессклише“).

„Ермак“ карапсен иккĕмĕш караванне пăрсем хушшинчен илсе тухнă

Июлĕн 9-мĕшĕнче Югорский Шар проливне „Ермак“ пăрçĕмрен çитнĕ, вăл унта Диксон утравĕ патĕнче хĕл касна пароходсен караванне илсе пынă. „Ермак“ кунпа пăрсем хушшинчен иккĕмĕш караван илсе тухнă 1938 çулхи Арктика навигацине пуçласа йарса, „Ермак“ Франц Иосиф Çĕрĕ патне çитсе, Тихая бухтăра хĕл касна „Русанов“, „Рошаль“ тата „Пролетарий“ карапсемпе пĕрле кайала таврăннă.

Югорский Шарĕнче тăнă хыççăн „Ермак“ каллех хĕвелтухăçне тухса кайать.

Диксон утравĕ патĕнче хĕл касна карапсем, кăмрăк илнĕ хыççăн, пăрçĕмрен Архангельска кайма тухаççĕ.

(ТАСС).

Вĕçевçĕ йурри

Ирпе, кăвак шуçăм çапсан тÿпене,
Кĕретĕп вĕççе пĕлĕтсем хушшине.
Пăхатăп йем-йешĕл çĕршывăм çине,
Йурлатăп хавасла кунçулăм йуррине.

Вĕçетпĕр çÿле, пит çÿле.
Мухтавлă çĕршывăм тÿлек.
Çулпуçĕ çитерчĕ пире
Ĕпир ĕмĕтленнĕ çĕре.

Октябрь хăтарчĕ пире асапран,
Хĕн-хурлă, тискер, сĕмсĕр пурнăçран.
Сад пек йешĕрет кунсерен Советстан—
Çулпуçĕ сана ĕмĕр ĕмĕр мухтав!

Вĕçетпĕр çÿле, пит çÿле.
Мухтавлă çĕршывăм тÿлек.
Çулпуçĕ çитерчĕ пире
Тахçан ĕмĕтленнĕ çĕре.

Тăшман пуçарсассăн хĕм-йунлă вăрçа,
Çĕкленĕпĕр епĕр пĕр харăс пурте.
Тĕлĕйĕ тăвăн çĕр-шыва нихăçан
Илĕймĕ нимле вăр-хурах та пиртен.

Вĕçетпĕр çÿле, пит çÿле.
Мухтавлă çĕршывăм тÿлек.
Çулпуçĕ çитерчĕ пире
Етем ĕмĕтленнĕ çĕре.

Семен Йĕлĕм.

Телейлĕ пурнăç кĕввисем

Улма чăпар утăма утланса
Уй-хир тавра туха еп çавăрнтăм.
Акăш пекек ишсе те уханса
Сталин панă телейпе çавăнтăм.

Сар хăмăшĕ кашлать, шывĕ йухать
Хур-кăвакал ишет савăнса.
Ентĕ телей йухать, телей йухать
Пирĕн çĕршыв тăрăх ытканса.

Хура чĕкеçсем йурланă чух
Çăл шывĕ йухнăнах туйăнать.

Çĕнĕ закон çинчен вуланă чух
Сталин атте калаçнăн туйăнать.

Çырла йăвăç лартса еп ÿстертĕм,
Çырлинчен мар пахча илемшĕн.
Пире Сталин пăхса та ÿстерет
Пур ĕçсене çĕнсе илмешкĕн.

Пĕлĕт çинче нумай çăлтăрсем,
Сут çăлтăртан çутти урăх çук,
Сталин аттен ытăм çăмахĕсем
Нихăçан чĕререн тухас çук.

Ник. Н. пухса йĕркеленĕ.

Йăнăша тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн 1937 çулти октябрĕн 8-мĕшĕнче тухнă „Большевикла хаçата таса алăпа тумалла тата çав çулти декабрĕн 26-мĕшĕнче тухнă „фальсификацине хирĕç“ йатлă статьясенче „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцин сотрудникне Ив. Ефремова редакцинчен хăваласа кăларса йанă тесе çырнăччĕ. Йефремова редакцинчен тĕрĕс мар кăларнă пулнă. Суд решенийĕ тăрăх ăна халĕ ĕçсĕр пурăннă вăхăтшăн компенсаци тÿлесе „Чăваш Коммунĕ“ редакцине кайала ĕçлеме илнĕ.

Канмали кунсенче экскурсине

Ленинград çар округĕнчи № çар чăçĕн командов нийĕ канмали кунсенче красноармеецсене тĕрлĕ вырăнсене экскурсине илсе кайать. Çăва тухнăранпа ĕлĕк Павел 1 патша пурăннă Гатчинăри дворецăа, Екатерина патша пурăннă Детское селори (халĕ Пушкин хули) çурта тата Старый Петергофа кайса куртăмăр.

Ку çар чăçĕнче Чăваш республикинчи Илей районĕнчен килнĕ красноармеецсем те пур. Вĕсем çакăн пек историлĕ вырăнсемпе питĕ интересленеççĕ. Кун пек вырăнсене курса çÿрени красноармеецсен пĕлĕвне ÿстерет.

Красноармеец А. Степанов.

Футбол

Мускав—Шупашкар

Июлĕн 10-мĕшĕнче Мускаври „Родина“ обществин футбол команди тата Шупашкарти „Спартак“ обществин команди йулташла тĕл пулса выльарĕç. Вăйă пуçлансан 20 минут хушшинче нихăш команди те пĕр пĕрин алăкне пĕр мечкă та тапса кĕртеймерĕç. Вăйă пĕр пек пычĕ. Анчах 20 минут иртсен, Шупашкар командинче выльакансен айăпĕпе вĕсем хăйсен алăкне хăйсемех пĕр мечкă кĕртсе йачĕç. Çакăн хыççăн, „Спартак“ командинче выльакансем начартарах выльама пуçларĕç. Кунпа мускав футболисчĕсем усă курса шупашкарсен çине хыттăн тапăнма пуçларĕç. Вăйăн малтанхи таймĕнче халасем „Спартак“ командин алăкне хăйсем икĕ мечкă тапса кĕртрĕç.

Иккĕмĕш таймра мускавсем шупашкарсен алăкне виççĕмĕш хут тапса кĕртрĕç. Вăйă пĕтесси çывхарас умĕн çеç спартаковецсем мускавсен алăкне пĕр мечкă кĕртрĕç. Вăйă 4 : 1 Мускав команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

„Спартак“ командинчи футболисчĕсем виçĕ хутчен „Родина“ команди алăкĕ патне илсе çитнĕ мечăкна тапса кĕртеймерĕç.

Тÿрĕлĕх

Шупашкар хулинчи Ленинградская урамĕнче 17-мĕш №-лĕ çуртра, 5 мĕш хватерте пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕ Ксения Зайцева июлĕн 11-мĕшĕнче хула пасарĕнче 66 тенкĕ те 90 пус укса тупнă. Вăл укçана хуçине тавăрса парас тесе Зайцева йулташ „Чăваш Коммунĕ“ редакцине килсе пĕлтерчĕ.

Водолазсен курсĕ

Чăваш Осводăн Шупашкарти шыва путассинчен çăлакан станци çумĕнче водолазсен шкулĕ ĕçлет. Шыв тĕпне анас ĕçе (водолаз ĕçне) Освод станцинчи матроссем 230 сехетлĕ программăпа тата ачасен техникăлă станцинчи Осводăн çамрăк тусĕсем—8 ача—52 сехетлĕ программăпа вĕренеççĕ. Шкулăн хăйĕн водолаз ĕçне вĕренмели çăмăл аппаратсем пур.

Осводăн çамрăк тусĕсем семафор ĕçне, шыва путакан çынсене çăлас ĕçе тата веслăсемпе ишме вĕренсе те ĕнтĕ.

Освод хăйĕн умне: „Кашни матрос водолаз пулмалла,“—тесе лозунг лартнă. Шкултан вĕренсе тухакан водолазсен Атăл тĕпне çăмăллăнах анма пултараççĕ.

Ответлă редактăр Н. Н. СЕМЕНАВ.

Сĕнтĕрвăрринчи театрăн пĕр спектаклĕ пирки

Чăваш республикинчи колхоз театрĕсем хушшинче Сĕнтĕрвăрринчи театр—чи „ватти“ пулса тăрать, вăл 1934 çултах организациленнĕ. Çавăнпа та унăн опыт та ытларах пулмалла, кадрсен квалификацийĕ, мастăрлăхĕ те ыттисенчен çÿлерех сыпăкра пулма тивĕç.

1936 çулта пуçса иртнĕ чăваш театрĕсен пĕрремĕш фестивалĕнче ку театр ытти колхоз театрĕсем хушшинче малти вырăна тухнăччĕ. Ун чухне епĕр ку театрăн икĕ спектаклĕне—„Ултăшĕ те йуратнисем“ тата „Йалта“ куртăмăр. Кайран, 1937 çулхи сезонра, çĕнĕ çак театртах „Дубровский“, „Пакет“ тата „Аниса“ спектаклĕсене пăхнăччĕ. Паллах, çак пур спектаклĕсен те пахалăхĕ пĕр пек пулман, хăшĕ вăйтарах, хăшĕ начартарах, анчах—пĕтĕмĕшле илсен—театр ĕçĕн культури хăпарса пыни çÿçĕрах курăннăччĕ. Тем тесен те театр пĕр вырăнта тăпăртатса тăман.

Çак кунсенче Сĕнтĕрвăрринчи театр Шупашкара килсе, Академилле театрăн çуртĕнче хăйĕн нумайăх та нумаях хатĕрленĕ çĕнĕ спектакльне—Н. Вирта çырнă „Çĕр“ (Земля) пьесине кăтартрĕ.

Ку пьесăн темин питех те интереслĕ историлле тема пулса тăрать. 1919—1921 çулсенче ĕлĕкхи Тамбов кĕпĕрнинче йулакла, совета хирĕçлĕ тискер бандăсем хресченсене пусмăрласа, пурлăхĕсене çаратса, пуçса, касса, çакса, çунтарса çÿренĕ. Бандăсен пуçĕнче Антонов эсер тăнă. Пьесăра çав антоновщина мĕнле пуçланса кайнине, вăл йеппе атуланнине, тата йăл арканнине кăтартнă. Пьесăн тĕп йĕрĕ—çĕршĕн кĕрешни, хресченсен пусмăрĕнчен хăтарни, эсеровщинăна арканни. Пьесăра тĕп геройсем—халăх. Вăл çĕршер çул хушши хăйĕн пурнăçĕн чăнлăхне шыранă, çав чăнлăха халăх Ленин патĕнче, большевиксен патĕнче тупнă. Çаксене „Çĕр“ пьесăра пит те туллин, тĕрĕссĕн кăтартса панă. Пьесăра Ленина хăйне кăтартман, анчах та Ленин халăхăн шухăшĕнче, унăн кăмăлĕнче пурăнать, Ленин çавăнтах, халăхпа пĕрле сцена çинче пулнă пекех туйăнать.

Малтанхи вăхăтра эсерсен „çу ятлă“, сăмахĕсене итлесе улталанна чухăнсемпе вăтамсем тĕрĕслĕх Ленинра, большевиксене çеç пулнине ăнланса илеççĕ, пĕтĕмĕшпех коммунистсен партийĕ кăтартса панă çул çине тăрса, эсерла-кулакла-бандитла пăлхава путарма тытăнаççĕ, стем çунĕпе тăранса пурăнна кашкăрсене пĕтереççĕ.

Пĕ сăн йулашки пайĕнче Андрей йатлă чухăн хресчен, „пурнăç чăнлăхне“ пĕлме Ленин патне кайса килнĕскер, хирте тарса çÿрекен Сторожев кулака тĕл пулать те, ăна çапла калать: „Тăрăмастăн ес çак çĕр çинче! Пирĕн пулать вăл, ĕмĕрлĕхех!“ Кайран, тарнă Сторожева тытсан, çав чухăн Андрейах калать: „Акă, пурнăç йепле çавăрăнса тухрĕ, мужиксем. Çак кашкăр вăл—хăйăхăн королĕ пуласшăнччĕ, пĕтĕм çĕре хăйне аллине çавăрса илесшĕнччĕ, анчах хăй çĕрĕ те пирĕн тата хăмăршăн хăмăр хорошсем.“

Кусем ĕнтĕ—чăн-чăн çĕнтерÿ сăмахĕсем.

Сĕнтĕрвăрринчи театр ку пьесăна хăйĕн репертуарне кĕртсе питĕ тĕрĕс тунă, мĕншĕн тесен ку пьесă колхозниксен массисене политикăла воспитани парас йенне питех те усăлă произведени.

Анчах те, çĕ пьесĕ суйласа илнипех пĕтмест-ха, пьесăн тĕп шухăшне, унăн пахалăхĕсене массă патне илсе çитермешкĕн ăна кирлĕ пек лартма пĕлес пулать. Йепле лартнă-ха Сĕнтĕрвăрринчи театр ку пьесăна, йепле спектакль туса кăларнă?

Театр пьесăна тĕрĕс ăнланса, тĕрĕс çулпа пынă. Пирĕн шутпа, спектаклĕн тĕп çитменлĕхĕ—вăл пур çĕрте те пĕр пек тикĕс марри. Хăш сыпăксем аван, вăйлă, ĕнентерÿлĕ, анчах те хăш-хăш сыпăксем çÿрĕкрех, темле синĕрреххĕн иртеççĕ, вĕсене тĕрĕсчетлĕ çулăм çук. Уйрăммах спектаклĕн пуçламăшĕ çавăн пекрех. Анчах ун пек вырăнсем нумайăх мар. Пĕтĕмĕшле спектакле çитĕнлĕ интерпеслĕ пăхатăн.

Халĕ ку спектакле артиссем мĕнле выльни çинчен калас пулать, мĕншĕн тесен хут йепле пронзведенин идейĕ те образсем урлă вăрласа пырать. Çавăнпа та артистсем пьесăри образсене йепле кăтартса панине хаклани кирлех.

Эсерсен бандисене хирĕç кĕрешекен партизансене йĕртсе пыракан Листрат—граждан вăрçи вăхăтĕнчи пит паха коммунистпропагандист, агитатор,—вăл çирĕп, хавасла, çав вăхăтрах кулăшла йуратакан çын. Ку роле И. Моллов артист выльать. Малтанхи пайра вăл хăйĕн ролне çăмăллăраххăн илсе пырать, анчах ытти пайсенче Молозов тĕрĕс йĕр çине тухса ĕнтерÿлĕ, йуратмалла образ туса парать, унăн шăлнĕн—Алешкан пирки выльакан Апанасен артист кирлĕ пек образ тăвайман, вăл темле ытлашши пăсăрăнчăклăрах, йалан темрен хăранă, шиклéнсе пекрех, анчах та вăл чылай вĕри, тарук пăлханса кайакан каччă пулмалла. Вĕсен амăшĕн—Маврă карчăкан ролне выльакан Мочалова артистă çителĕклĕ ĕнентерÿлĕ образ тунă темеле. Вăл ниме ывăлне тискерлисен командире те, улталанна пирки бандитсемпе пĕрле кайнине те пĕрешеклĕх, ывăшне йуратăвĕпе йуратать, анчах ăстăла каймалла пĕлмест... Мочалова ку роле лайăх иртерет. Алешкăн савнийĕ—Наташа рольне М. Ильйна артистка ăнланайманни курăнать. Çирĕп чĕререн йуратнине хут мĕн тума хатăр хĕр выранне епĕр вăйкăшакан, темле мĕшенле сентиментальностьпа туса лартă „барышняна“ куртăмăр. Ахăлă те, Ильина пирки çакна калама: вăл йулашки пьесăсенче йалан хăйле выльать, образ туни пăлармасть. Пĕлместпĕр, тен кунта режиссура айăпă пулĕ.

„Чăнлăха шырса“ Ленин патне кайса килнĕ вăтам хресчен Фрол Блев образне Игнатьев артист паха кăтартрĕ. Унпа пĕрлĕ çÿрекен чухăн Андрей та (арт. Ашуркин) начар мар.

Тăшмансен ролĕсене выльакан артистсенчен чăн малтан Кузьмина (б. идиг Антонов), арт. Моисеева (кулак Сторожев) тата арт. Алешевана (бандитка Косова) асăнас пулать. Чăнах та, Кузьмин артист Антонова хăшпĕр тĕлте ытлашши мелахолика кăтартать (V-мĕш картин, бандитсен ĕçкинче), арт. Моисеева темле тăлăмак тумтирĕ тăхăнтартнă, çавăнпа та кулак образĕ вырăнвыранĕпе сапаланса кайать,—анчах куна режиссура йăнăшĕ тесе шутлатпăр епĕр. Ытти рольсене выльакансем пурте пĕр пекрех выльаççĕ.

Декорацисем пирки нимех те калама çук, мĕншĕн тесен вĕсене пĕчĕк сцена вальĕн хатĕрленĕ, пысăк сцена çинче вĕсем чăн-чăн оформлени пек курăнма пултараççĕ. Епĕр III-мĕш картинра теплушка вырăнне темле чалăш пÿрт тунине çеç килĕшме пултараймастăр. Тата хăш-пĕр костюмсене истори йенĕпе тĕрĕсрех тума пĕлес пулать.

Епĕр кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерсен, пирĕн шутпа ку спектакль Сĕнтĕрвăрринчи театрĕн репертуарĕнче нумай вăхăт тытăнса тăмалла.

Леонид Агаков.

„СПОТАРА“
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ
КАНТУРНЕ

бухгалтер-ревизор,
бухгалтер помощникĕ йе опытлă картотетчик-счетовод,
статистик тата „Спотара“ Йĕпресри заводĕнче ĕçлеме

технический директор

кирлĕ

Условисем килĕшÿ тăрăх. Бухгалтер-ревизорпа технический директор валли хваттерсем пур.

Адрес: г. Чебоксары, Красноармейская, 5, Чăваш кантуре „Спотара“ или по телефону № 3—95.

Чăвашсен Коммунисла Йалхуçалăх шкулне çулталăк ĕçлеме

2 БУХГАЛТЕР КИРЛĔ

Ĕçе кĕме асăл бухгалтер патне пымала. Адрес: ул. Ленинградская, 3
Ректорат.

„Чăвашвăрманпром“ трестăн Шăмăршăри вăрмапромхозне

машинистка васкавлă кирлĕ.

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Шемурша, ЧАССР, рабочий поселок д. № 6. Леспромхоз к. директору.
Дирекци.

ГОСУДАРСТВĂН ХУСАНТИ МЕДИЦИНА ИНСТИТУЧĔ

1938 - 39 вĕренÿ çулĕнче вĕрентме илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Институтра çак факультетсем пур: сиплеме вĕренмели, санитарипе гигиена тата педиатри.

Заявленисене институт директорĕ йачĕпе автобиографипе тата çак документсемпе пĕрле йамала:

а) вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинник),
б) паспорта пĕрле илсе пымалла,
в) военнообязанныйсен ку документсемсĕр пуçне тата çар службин тивĕçĕлĕх пирки справка тăратаççĕ,
г) виçĕ фотокарточка, вĕсем çине хăйсен хушамачĕ çырса йăрăрăм.

Заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕнче йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕнĕ чухнехи испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20 мĕшĕнче çак предметсем тăрăх пулаççĕ—вырăс чĕлхи, математика, физика, химия, политграмота тата пĕр-пĕр йут çĕршыв чĕлхи (нимĕç, француз, акăлчан).

Студентсене вальĕн общежити тата стипенди пулать.

Июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа институтра пур предметсем тăрăх та консультаци пулать.

Адрес: Казань, Чернышевская, 16. Приемная комиссия Мединститута.